*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

1938 ОКТЯБРЕН 11
ЫТЛАРИКУН
235(5048) №

# Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ

Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Шупашкар, ул. Володарского, 5. Дом Печати.

ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 0—23.

## Машинă паркне хăвăрт тата лайăх пахалăхпа йусамала

Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче пирĕн социалисăмла йалхуçалăхĕ пиншер çĕнĕ те паха машинсем туйанчĕ. Колхозсен, совхозсен тата машинă-трактăрлă станцисен аллинче халь шултра машинăсем питех те нумай шутланса тăраççĕ. Çавăн чухлĕ машинă нихăш капиталисла çĕршывра та çук. Пиншер трактăр, темиçе çĕршер комбайн тата автомашинăсем ĕçлерĕç кăçал республикăри колхозсен уй-хирсенче. Çав май тырпулсене пухса кĕртес ĕç те кăçал иртнĕ çулхисенчен хăвăртрах пулса иртрĕ.

Йалхуçалăхĕ шултра машинсемпе механизациленни çĕрĕç оргăнĕсенче ĕçлекенсем çине, парти тата совет организацийĕсен работникĕсем çине машинăсене сыхласа усрас тата лайăх пахалăхпа йусаса хăртас тĕлĕшпе пит пысăк ответлăх хурать. Машинăсен ĕç тухăçне ÿстерессишăн сталинла вăйлă тырпулшăн малашне татах та анăçлăн кĕрешессишăн малтанах машинăсене йусаса хатĕрлес ĕçе мĕнле иртерничен килни халь ĕнтĕ пуриншĕн те паллă.

Шупашкар, Ишлей, Тутаркас, Патăрйел, Пăрачкав районĕсенчи машинă-трактăрлă станцисенче иртнĕ çуркунне уй ĕçне тухсан малтанхи кунсенче трактăрсем çĕмĕрлсе кайса, ĕçлеймесĕр нумай ларни—чи малтанах трактăрсене хĕллехи вăхăтра кирлĕ пек йусаса хатĕрлеменнинчен килнĕ. Чылай МТС-сенче трактăрсене йусас ĕç декабĕрпе йанвар уйăхĕсенче çеç сарăлса кайнă, йусанин пахалăхне тата трактăрсене йышăнассине начар контроллесе пынă.

Калас пулать, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ тата МТС-семпе МТМ директăрĕсем трактăрсене йусас ĕçре иртнĕ çулта пулнă йăнăшсенчен кăçал хăйсене валли тивĕçлĕ вывăд туман,—трактăрсене йусас ĕçе пайан куна çити те сарса йаман. Çаксем çинчен партин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ те хăйĕн решенийĕнче палăртса, çапла кăтартса хăварчĕ:

„Конференци кăçалхи çул трактăр паркĕ çителĕксĕр ĕçленин сăлтавĕсенчен пĕри—трактăрсемпе ытти йалхуçалăх машинĕсене кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра ытла та начар йусани пулнă тесе шутлать, çавăнпа та конференци Обкома, Халăх Комиссарĕсен Советне, Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, МТС-семпе МТМ-сене, райкомсемпе райĕçтăвкомсене халех трактăрсемпе ытти йалхуçалăх машинисене кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтри йусава хатĕрленсе иртерес ĕçе тытăнма хушать, çак ĕçе 1939 çулти мартăн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермеле. Уйрăмах ремонтăн пахалăхĕ çине пăхмала".

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулти çентабĕрĕн 8-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, трактăрсене йусас ĕçе малтанах хатĕрленсе октăбĕрĕн 1-мĕшĕнчен кайа йулмасăр пуçласа йамала пулнă. Октăбĕрĕн 10-мĕшне пĕр машинă-трактăрлă станци те çав ĕçе тивĕçлипе тытăнман, чылай МТС-сем моторсене йусаттарма тата трактăрсене капиталлнăй ремонт тума МТМ-семпе договăрсем те туса çитермен. Йĕпреçри машинă-трактăрлă станцин кăçал пурĕ 46 трактăр йусамала. Вĕсенчен 16 трактăра капиталлнăй ремонт тумала. Вĕсене йусама Канашри МТМ-па халь те договăр туман. МТС хăйĕн маçтерскойĕнче пайанхи куна „ЧТЗ" маркăлă пĕр трактăра çеç йусама пуçăннă. Вăл та чарăнса тăрать, кирлĕ запаслă пайсем çитмеççĕ.

Запаслă пайсем, пуринчен ытла подшипниксем, бабит МТМ-сенче те çук. Канашри МТМ пайанччен 5 МТС-пе договăр тунă. МТМ дирекцийĕ пĕлтернĕ тăрăх, запаслă пайсем çитмен пирки, вăл халь çав договăрсене те пурнăçа кĕртме пултараймасть. Автотрактородеталь кантурĕ IV-мĕш квартăлта мĕн пурĕ те 96 подшипник çеç кÿрсе килме шутлать. Вăл хисеп республикăра йусама кирлĕ трактăрсенчен 25 процентне йусама та çитеймест.

Çапла вара, кĕркуннехипе хĕллехи вăхăтра йалхуçалăх машинисене, чи малтанах трактăрсене йусас ĕç партипе правительства кăтартнă срукенче пурнăçа кĕмесĕр йулас хăрушлăх умĕнче тăрать. Обкомăн йалхуçалăх пайĕн тата Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн çак ĕç çине татах тепĕр хут çаврăнса пăхса, ремонт ĕçне пуçласа йама МТС-семпе МТМ сене кирлĕ пулăшу памала. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн трактăрсем тата ытти йалхуçалăх машинисем валли кирлĕ запаслă пайсене вăхăтра тупса памала.

Иртнĕ çулта трактăрсене йапăх йусанин тата вăл ĕç пит вăрăма тăсăлнин сăлтавĕ МТС-семпе МТМ-сенче рабочисен ĕçне йапăх организациленинче те пулнă. Ĕç тухăçлăхĕпе унăн пахалăхĕ чи малтанах ĕçе тĕрĕс организациленинчен, ĕç нормине йĕркеленинчен килет. Çĕрĕç оргăнĕсенче пулнă халăх тăшманĕсем ĕç нормисене тата ĕçшĕн тÿлес йĕркене тĕрлĕ майсемпе пăтраштарса пынă. Сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене тĕппипех пĕтерсе çитермеле, МТС тата МТМ руководителĕсен çав ыйтăва тĕплĕн хутшăнса, ĕç нормине тата ĕçшĕн тÿлес йĕркене йĕркелесе пырса, рабочисем хушшинче стаханăвла йухăма сарса пымала.

Трактăрсене йусас ĕçре ĕç вăйне тата йусанă трактăра йышăнассине тĕрĕс йĕркелесси пысăк ыйту пулса тăрать. Трактăр йусакан бригадăсем чи аван механиксенчен, комбайнерсенчен, трактăр бригадисен бригадирĕсенчен тата трактăриссенчен пулмала. Кашни йусанă трактăра МТС директăрĕпе аслă механикăн тата çав трактăрпа ĕçлекен трактăрисăн хăйсен йышăнмала.

Трактăрсемпе ытти йалхуçалăх машинисене йусас ĕçрен райкомсемпе райĕçтăвкомсем те пăрăнма пултараймаççĕ. Вĕсен МТС-сенче тата МТМ-сенче ĕç мĕнле пулса пынине кулленех пĕлсе тăрса, трактăрсене партипе правительства панă срукенче йусаса çитермеле тăвассишĕн вăйлăн кĕрешмеле. Çĕнĕ кадрсене пулăшасси, вĕсен пуçарулăхне сарса пырасси,—парти тата совет организацийĕсен тивĕçĕ пулса тăрать. МТС тата МТМ руководителĕсем йĕнчен пĕр минутлăха та лăпланса ларни пулмала мар. Машинă тата трактăр паркне лайăх пахалăхпа йусаса çитермеле.

## Мускав—Инçет-Хĕвелтухăç хушшинчи паттăрлă вĕçев

### Екипаж Комсомольск хулине кайать

Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йултăшсене Комсомольск хулине илсе кайакан „Дальневосточник" катер Амгунь йухан шывĕ Амура йухса кĕрекен çĕреле ăнăçлăн çитсе пырать.

Октăбĕрĕн 9-мĕшĕнче, Мускав вăхăчĕпе 15 сехетре катер Кербирен 210 километртра ларакан Удинск йалне çитнĕ. Катер кайакан çул çинче сынсем пурăнакан тепĕр вырăн—вăл Тахты поçолăк. Ку поçолăк Амгунь шывĕ Амур çине йухса тухакан вырăнта ларать. Унта çитме тата 170 километр йулнă.

Гризодубăвă, Осипенко тата Расковă йултăшсем Тахты поçолкинчен Амур шывĕ тăрăх Комсомольск хулине кайаççĕ.

**

Хăйулă екипажăн командирĕ Гризодубăвă йултăшпа Мускавран тÿрех çыхăнса калаçнă хыççăн, çакă паларнă: çентăбĕрĕн 24-мĕшĕнче вĕçсе тухса çентăбĕрĕн 25-мĕшĕнче Дукирен çурçĕр-хĕвелтухăçнерех (Инçет-Хĕвелтухăç) анса ларнă „Родина" самольот сывлăшра 26 сехет те 29 минут пулнă. Самольот маршрутпа 6.450 километр, тÿрĕрен илсен 5.947 километр вĕçнĕ.

Гризодубăвă йултăш самольот 7.500 метр çÿлĕшĕнче вĕçни çинчен пĕлтернĕ. Вăтам шутпа илсен самольот 6.500 метр çÿлĕшĕнче вĕçнĕ. Байкал кÿллинчен иртнĕ хыççăн пĕлĕтсем хушшинче ним курмасăр вĕçмеле пулнă.

Самольотăн материаллă чаçĕсем, тесе пĕлтернĕ Гризодубăвă йултăш, питĕ лайăх ĕçлерĕç. Бензин пĕтнĕ пирки анса лармала пулчĕ, Шурлăхлă хире тата самольотăн шаççисене кăлармасăрах анса ларнă пулсан та, самольот пĕтĕмпех йусавлă, çĕр шăнса ларнă хыççăн вăл самольотпа вĕçсе тухма пулать. Çавăн пекех самольот çинчи приборсем те пĕри те ванман. Самольот ларнă вырăна парашутпа сиксе аннă спорт комиссарĕсем самольот анса ларни çинчен акт çырчĕç тата барографсене илчĕç, вĕсене Мускава тăратаççĕ. Баксемпе барографсем çинчи пломбăсем те тĕрĕсех.

(ТАСС).

## Каллех вахтăра тăратăп

### Хасан кÿлли патĕнчи çапăçура пулнă красноармейĕц амăшĕ патне йанă çыру

Çак кунсенче Иванăвăри „Коммунистический авангард" хапрăкри ткачихă Инçет-Хĕвелтухăçĕнчен хăйĕн ывăлĕнчен çыру илнĕ. Çырура пирĕн Хĕрлĕ Çарăн геройла кунĕсем çинчен каласа панă.

Петр Медведĕв снайпĕр çапла çырать:

— Епĕ телейлĕ те хĕпĕртетĕп, аннем, мĕншĕн тесен мана хамăрăн таса та никам тĕкĕнмеле мар чикĕсене хÿтĕлеме, Хасан кÿлли районĕнчи çапăçура пулма чыс тиврĕ. Епĕ хамăн снайпĕрла винтовкăна çирĕппĕн тытса пытăм, Йапони самурайĕсене курсанах епĕ вĕсене тĕл пере-пере вĕлертĕм. Пĕр пульди те сайа каймарĕ, вĕсем пурте тĕл тиврĕç.

Иккĕмĕш хут çапăçнă чухне тăшман гранати манăн винтовкăна салатса тăкрĕ. Епĕ амантăм. Çапăçнă çĕртенех госпиталĕ лекмеле пулчĕ.

Халĕ ĕнтĕ, аннем, епĕ сывăлса çитрĕм, каллех вахтăра тăратăп.

Пĕр шиксĕр те лăпкăн ĕçлĕр, епĕр кирек хăш вăхăтра та, кирек мĕнле тăшмана та çакăн пекех çирĕп отпор пама пултаратпăр.

(ТАСС).

## „Ленин" пăрçĕмрен Архангĕльска таврăннă

АРХАНГĔЛЬСК, октăбĕрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Çулталăк çурă Арктикăра ишнĕ хыççăн ĕнер Архангĕльск портне „Ленин" пăрçĕмрен таврăннă.

Августăн 5-мĕшĕнче „Красин" пăрçĕмрен пулăшнипе Лаптĕвсен тинĕсĕнче пăрсен тыткăнĕнчен ирĕке тухнăскер, „Ленин" пăрçĕмрен хăйĕн „Ильмень", „Товарищ Сталин", „Диксон" пăрахутсен караванĕпе пĕрле Тикси бухтине çул тытнă, унта кăмрăк илнĕ хыççăн—Диксон утравĕ патне кайнă. Вилькицкий проливĕ патне тухнă хыççăн, „Ленин" кунта вахтăра тăнă. Вăл кирек хăш минутра та ытти пăрахутсене пулăшу пама хатĕр тăнă. „Моссовет" пăрахутпа пĕрле (вăл транспăрт пăрахучĕсенчен Лаптĕвсен тинĕсĕнчен чи кайран тухнă) „Ленин" пăрçĕмрен Диксон утравне пынă. Кунтан Мурманска килме тухнă. Хăйпе пĕрле вăл „Ильмень" пăрахута буксира илсе пынă. „Ильмень" пăрахут пăрсем хушшинче ишнĕ чухне рульне çухатнă пулнă. Баренцев тинĕсĕнче сакăр баллă шторм пулнине пăхмасăр „Ленин" операцисене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнĕ.

## Пĕр ĕçкунĕ çине 50 килограм тĕштырă илеççĕ

Урицкий районĕнчи, Кустанай облăçĕ, Казах ССР, колхозниксен пуйан пурнăçĕ ÿссех пырать. Кăçал Тельмăн йачĕпе тăракан йалхуçалăх артелĕ ĕçкунĕ пуçне 50-шар килограм тĕштырă валеçет. Садбайĕв колхозник аванс шучĕпе 750 пăт, Алдабергенов йултăш—500 пăт илнĕ.

Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕ Тригăв Иван хăйĕн çемйипе 2 697 пăт тĕштырă илет. „Культпоход" колхозăн тимĕрçĕ Сиганко йултăш çемйипе ĕçлесе 3 пин пăт тырă илет.

(ТАСС).

## Германипе Америкă писателĕсем фашисăма хирĕç

Америкăри Пĕрлешÿлĕ Штатсенче пурăнакан Германин паллă писателĕсем тата драматургсем пурĕ 40 çын „Германипе Америкă писателĕсен фашисăма хирĕç кĕрешмели лигă" организациленĕ. Çак лигăна тунă май, Америкăн паллă писателĕсенчен нумайăшĕсем лигă йачĕпе саламлă çырусем йанă.

(ТАСС).

## Итали интервенчĕсен çĕнĕ хăтланăвĕ

Франци хаçачĕсем—„Итали правителстви, Франко генералпа килĕшсе, Испанире 18 уйăх хушши служит тунă италийанĕцсене Франко çарĕнчен хăтарать", тесе çыраççĕ. Итали пичечĕ çак решени çинчен пур майсемпе те шавлать. Анчах пĕлтерÿсенчен çакă курăнать: интервентсен çарĕсене чăнипех те Испанирен илсе кайасси пирки мар. Итали салтакĕсене улăштарасси çинчен сăмах пырать. Çартан пуринчен ытла тахçанах стройран тухнă инвалидсене чĕнсе илеççĕ.

(ТАСС).

## Германири массăлă арĕссем

Йулашки кунсенче пĕтĕм Германире „Стальной шлем" союзăн членĕсем пулнă тата нимĕçсен нацилĕ партин членĕсем пулнă çынсене массăлăн арĕслеççĕ. Пĕр Карлсруе хулинче кăна Германин вăрттăн полицийĕ 40 çынна арĕсленĕ, вăл шутран чылайăшĕ паллă врачсем. Арĕсленисенчĕн нуççĕшне пăрсе вĕлернĕ.

## Китайри вăрçă

Центрти Китайра Цзуцзйан—Ханькоу линийĕ çинче йапонĕцсем Сингочжоу çине тапăнса пыраççĕ. Çак районра йапонĕцсен 50 пин çынна çитекен çарĕ тăрать. Октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче йапонĕцсен пысăк мар отрйачĕ, Сингочжоуран кăнтăр йеннерех вырăнта, Йансинь шывĕ урлă каçнă.

Лучжоу—Синьйан шоççе çулĕ çинче Лошань-Синьйан участикинче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Йапонĕцсем Бейпинпа Ханькоу хушшинчи чукунçулăн Люлин станцине йышăннă. Йулашки хыпарсем тăрăх, станцие йышăннă отрйада пĕтĕмпех китайĕцсем çавăрса илнĕ.

Октăбĕрĕн 6-мĕшĕнчен пуçласа йапонĕцсем Китай çарĕн позицийĕсем çине сывлăшран тапăнассине вăйлатнă. Октăбĕрĕн 7-мĕшĕнче йапонĕцсен 150 самольочĕ ытла Китай йалĕсемпе хулисем çине тапăннă.

(ТАСС).

## Ченстоховра пысăк забастовкă пулса иртнĕ

ВАРШАВА, октăбĕрĕн 8-мĕш. „Роботник" хаçат пĕлтернĕ тăрăх, октăбĕрĕн 6-мĕшĕнче Ченстохов хулинчи ĕçсынисем, темиçе ерне кайарах Говояйри строительствă материалĕсене туса хатĕрлекен хапрăкра забастовкă пуçарса йанă рабочисемпе пĕр шухăшлă пулса, пысăк забастовкă туса иртернĕ. Забастовкăна 25 пин çын хутшăннă. Забастовкă вăхăтĕнче Ченстоховри тата хула çывăхĕнчи предприйатисем пурте ĕçлеме чарăннă. Забастовкă 2 сехет хушши, кăнтăрла 13 сехетрен пуçласа 15 сехетчен пулнă.

(ТАСС).

Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă тĕле

Амур йухан шывĕ çинчи Хĕрлĕ йалавлă флотили пулеметчикĕ.
Д. Дебабăв фото-ÿкерчĕкĕ („Пресскл[иш]е").

## Чехословакири лару-тăру

### „Епĕр хамăрăн тăван çĕре нихăçан та пăрахмастпăр"

*Чехословакири интеллигенци чĕнсе калани*

Чехословакири культурăлă 47 пĕрлешÿ—писателсен, ăслăлăхпа искуствă работникĕсен, общчĕствăлă тата культурăлă организацисен пĕрлешĕвĕсем—Германи, Англи, Франци тата Итали Чехословаки государствипе халăхне вăйпа хĕсĕрлесе пусмăрланине хирĕç протест туса пĕтĕм цивилизацилĕ тĕнчене чĕнсе калană. Чĕнсе каланинче çапла çырнă:

„Хальхи вăхăтра нумай çĕршывсенче мир çинчен калаççĕ, мирлĕ пурнăçа Мÿнхĕнра хăтарса хăварнă имĕш. А пирĕн халăха çаратса хăварчĕç, ăна пусмăрларĕç, ăна ултавлă пропагандăпа мăшкăласа вараларĕç, ăна хăйĕн ĕнерхи тусĕсем улталарĕç.

Хамăр тăван çĕршывшăн çак йăвăр вăхăтра епĕр киревсĕрлĕ, пусмăрлă ĕçе хирĕç протест сасси çĕклетпĕр, çав киревсĕр ĕçе туса тăвата державă Йевропă валли иккĕлентерекен мир туйанчĕç. Пиншер çул хушши Чехословаки çĕрĕсен пайĕ пулнă территорисене вăйпа пусмăрласа йухăнтараççĕ, çĕршер çулсем хушшинче туса çитернĕ культурăлă пĕрлĕхе пĕтереççĕ, çак киревсĕр ĕçпе чех халăхĕ çеç мар, пирĕн республикăра пурăнакан нимĕçсен чи пысăк пайĕ те килĕшмест. Цивилизацилĕ тĕнче халăхсен çут-çанталăкран килекен прависене тăвата державă конференцийĕ таптанă пек таптаса тăкассине, вĕсем тÿсме çук киревсĕр пусмăрлă, варварла ĕç тума пултарассине епĕр нихăçан та кĕтмен.

Епĕр пĕтĕм цивилизацилĕ тĕнче совĕçне чĕнсе калатпăр. Пĕлер, вăйсăртараххине вăйпа пусмăрласа, изменăлă тата икĕ питлĕ ĕçсем туса çирĕп те вăрăм вăхăта пыракан мирлĕ пурнăç туса хума май çук. Епĕр—чех халăхĕпе словак халăх интеллигенцин представителĕсем — çакна калатпăр: епĕр хамăрăн тăван çĕре нихăçан та пăрахмастпăр, епĕр йаланах хамăр халăхсен ирĕклĕ пурнăçĕ патне, республикă економика тĕлĕшĕнчен хăй вăйĕпе хăй аталанса ÿсме пымали майсем патне туртăнатпăр. Пайан пире ирĕксĕрлесех Мÿнхĕнри варварла килĕшÿве пăхăнтараççĕ пулсан та, епĕр çав ĕçсене тума пăрахас çук".

## Автономлă Словакин тата Закарпат Украинин правителствисене туса хунă

Чехословаки правителстви автономлă Словаки правителстви составне çирĕплетнĕ. Словаки правителствин пуçлăхĕ —Тисо, Словакири автономиссен руководителĕ. Вăлах—шалти ĕçсен министрĕ.

Словаки правителстви çывăх вăхăтсенчех йеврейсене хирĕçле саккун кăларĕ тата рабочи класăн революцилĕ организацийĕсене хирĕç наступлени пуçлама хăтланса пăхĕ, тесе шутлаççĕ.

Çавăн пекех тата Чехословаки правителстви Закарпат Украинине автономи парасси çинчен решени йышăннă, унта Броды автономис пуç пулса тăракан правителствă туса хунă.

(ТАСС).

## Чехословакипе Германи хушшинчи калаçусем

Октăбĕрĕн 8 мĕшĕнче Берлинра Чехословаки правителствин делегацийĕпе Германи правителстви хушшинче економикăлă калаçусем пуçланнă. Калаçу —чукунçулсемпе усă курмалли çĕнĕ йĕрке ыйтăвĕ пирки пырать. Ку ыйту ĕнтĕ Чехословаки государствă чукунçулĕсен пĕр пайĕ Германи йышăннă территори çине кĕнĕ май тухса тăнă. Кунсăр пуçне тата калаçусенче Германи аллине кучнă предприйатисенчи йертсе пыракан аппаратпа усă курасси çинчен, Чехословакипе Германи хушшинчи сывлăшри çыхăнăва çĕнĕрен пуçласа йарасси çинчен т. ыт. те сÿтсе-йаваççĕ.

(ТАСС).

## Польшă çарĕсем Чехословакин Силезине йышăннă

Октăбĕрĕн 8-мĕш тĕлне Польшă власĕсем Чехословакин территорине 548 тăваткăл километр тытса илнĕ, унта 85 пин çын пурăнаççĕ (вĕсенчен 45 процент чехсем). Октăбĕрĕн 10-мĕшĕнче Польшă çарĕсем чехсем ытларах пурăнакан районсене йышăнма тытăнаççĕ. Польшă çарĕсем йышăннă районсенче çар командовани чехсен шкулĕсене пурне те хупнă.

(ТАСС).

## Фланден—Гитлĕр агĕнчĕ

Мÿнхĕнри килĕшÿ хыççăн Францири реакцилĕ лагĕр палăрмалăх намăссăрланни курăнать. Фланден—Францири реакцилĕ буржуази лидĕрĕсенчен пĕри, „демократилĕ сойуз" текен партин председателĕ, Гитлĕра уççăнах пулăшать. Пурте пĕлеççĕ, Мÿнхĕнри килĕшÿве тунă майпа Фланден Гитлĕре сывлăх сунса саламланă. Фланден уççăнах Гитлĕр майлă тăни Франци халăхĕн аниăсийĕсене çеç мар, тата вăл (Фланден) йертсе пыракан партири çынсене те тарăхтарать. Нумайăх пулмасть вăл партирен унăн вице-председателĕ сенатăр Жан Торин тухнă. Хальхи вăхăтра пичет вăл партин тепĕр лидĕрĕ Поль Рейно, йустици министрĕ, парламент депутачĕ унтан тухни çинчен пĕлтерет. Политикă тĕлĕшĕнчен Фланденаа пĕр шухăшлă çынсенчен пĕри Анри де Кериллис ирĕксĕрех çапла каланă: урăх çĕршывра пулсан çавăн пек выступленисемшĕн Фландена арĕсленĕ пулĕччĕç, тенĕ.

(ТАСС).

# Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бол̆шевиксен) Партин

# ИСТОРИЙĔ

*ПСК(б)П Тĕпкомĕн Комиççийĕ редакцилен Ĕ.* **КĔСКЕ КУРС.** *ПСК(б)П Тĕпкомĕ ырланă. 1938 ç.*

## УМĔН КАЛАНИ

Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бол̆шевиксен) партийĕ Роççийăра иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче пуçланнă пирвайхи марксисла пĕчĕк кружоксемпе группăсенчен тытăнса хал̆хи вăхăтра рабочисемпе хресченсен тĕнчери пĕррем ĕш социалисăмлă государствине йертсе пыракан бол̆шевиксен аслă партийĕ пулса тăни таран вăрăм та мухтавлă çула утса тухрĕ.

ПСК(б)П револ̆уцичченхи Роççийăри рабочисен йухăмĕн никĕсĕ çинче марксисла кружоксемпе группăсенчен ÿссе çитĕннĕ, вăл кружоксемпе группăсем рабочисен йухăмĕпе çыхăнса, ку йухăма социалисăмла ăнланулăх кĕртнĕ. ПСК(б)П марксисăмăн-ленинисăмăн револ̆уцилĕ вĕрентĕвĕ тăрăх ĕçлесе пынă тата ĕçлесе пырат̆ те. Унăн çулпуçĕсем империалисăмăн, империалисăмла вăрçăсен тата пролетарилĕ револ̆уцисен епохин çĕнĕ условийĕсенче Маркспа Енгĕл̆сăн вĕрентĕвне малала аталантарнă, ăна çĕнĕ пусăма хăпартнă.

ПСК(б)П рабочисен йухăмĕн ăшĕнчи вакбуржуалă партисене—есерсене (унтан маларах вĕсен предшественникĕсене — народниксене), меншевиксене, анархиссене, пур йышши буржуалă националиссене хирĕç, парти ăшĕнче—меншевикла, оппортунисла йухăмсене, —троцкиссене, бухаринĕçсене, национал-уклониссене тата Ленина хирĕçле ытти группăсене хирĕç принциплă кĕрешÿре ÿссе тата тĕрекленсе пынă.

ПСК(б)П рабочи класăн пĕтĕм тăшманĕсене, ĕççыннисен пĕтĕм тăшманĕсене—помещиксене, капиталиссене, кулаксене, сăтăрçăсене, шпионсене хирĕç, капиталисăмлă йĕри-тавралăхăн пĕтĕм наймникĕсене хирĕç револ̆уцилĕ кĕрешÿре тĕрекленсе тата пиçĕхсе пынă.

ПСК(б)П историйĕ виçĕ револ̆уци историйĕ пулса тăрат̆: 1905 çулти буржуалă-демократилĕ револ̆уцин, 1917 çулти феврал̆ти буржуалă-демократилĕ револ̆уцин тата 1917 çулти октябĕрти социалисăмлă револ̆уцин историйĕ.

ПСК(б)П историйĕ патша йĕркине сирпĕтсе антарнин, помещиксемпе капиталиссен влаçне сирпĕтсе антарнин историйĕ, граждан вăрçи вăхăтĕнче йутçĕршывсен хĕçпăшаллă интервенцине çĕмĕрсе тăкнин историйĕ, пирĕн çĕршывра совет государствине тата социалисăмлă обшчĕствăна туса хунин историйĕ пулса тăрат̆.

ПСК(б)П историне вĕренни пирĕн çĕршыври рабочисемпе хресченсем социалисăмшăн кĕрешнин опычĕпе пуйанлатат̆.

ПСК(б)П историне вĕренни, пирĕн парти марксисăмăн-ленинисăмăн пĕтĕм тăшманĕсене хирĕç, ĕççыннисен пĕтĕм тăшманĕсене хирĕç кĕрешнин историне вĕренни **бол̆шевисăма вĕренсе алла илме** пулăшат̆, политикăлă сыхăлăха ÿстерет.

Бол̆шевиксен партин паттăр историне вĕренни обшчĕствă аталанăвĕн тата политикăлă кĕрешÿ саккунĕсене пĕлнипе, револ̆уцине тăвакан вăйсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарат̆.

ПСК(б)П историне вĕренни Ленин—Сталин партийĕн аслă ĕçĕ татăклăнах çĕнтерессине, коммунисăм пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерессине шанса тăрассине çирĕплетет.

Çак кĕнеке Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (бол̆шевиксен) партин историне кĕскен каласа парат̆.

## I СЫПĂК

## РОÇÇИЙĂРА СОЦИАЛ-ДЕМОКРАТЛА РАБОЧИ ПАРТИ ТĂВАССИШĔН КĔРЕШНИ.

### (1883—1901 ÇУЛСЕМ)

### 1. Роççийăра крепостной правăна пăрахăçа кăларни тата промышлĕннăй капиталисăм аталанни. Кучухнехи промышлĕннăй пролетариат пуçланса кайни. Рабочисен йухăмĕн малтанхи утăмĕсем.

Патша Роççийĕ капиталисăмла аталану çулĕ çине ытти çĕршывсенчен кайранрах тăнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсемччен Роççийăра хапрăксемпе савăтсем питĕ сахал пулнă. Дворйан-помещиксен крепостной хуçалăхĕсем ытларах пулнă. Крепостной строй вăхăтĕнче промышлĕннăç кирлĕ пек аталанма пултарайман. Крепостной йĕрке вăхăтĕнчи ирĕксĕр ĕç йалхуçалăхĕнче сахал тухăç панă. Економикăлă аталанăвăн пĕтĕм утăмĕ крепостной правăна пĕтерме тĕртсе пынă. Крымри кампани вăхăтĕнче вăрçăра парăннипе вăйсăрланнă тата хресченсем помещиксене хирĕç „бунтсем" тунинчен хăраса ÿкнĕ патша правительствин 1861 çулта крепостной правăна ирĕксĕрех пăрахăçа кăлармала пулнă.

Анчах крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн та помещиксем çаплах хресченсене пусмăрласа пурăннă. Хресченсене „ирĕке кăларнă" чухне вĕсем унччен усă курнă çĕрĕн чылай пайне туртса илсе, касса илсе, помещиксем хресченсене çаратса хăварнă. Çĕрĕн çак пайне хресченсем „отрезкăсем" теме тытăннă. Хресченсене хăйсене „ирĕке кăларнăшăн" çĕр укçи—икĕ миллиард тенкĕне йахăн помещиксене тÿлеттернĕ.

Крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн хресченсен ирĕксĕрех пит йăвăр условисемпе помещик çĕрне тара илмеле пулнă. Тара илнĕ çĕршĕн укçан тÿленисĕр пуçне помещик час-часах хресченсене хăйсен хатĕрĕсемпе тата лашисемпе помещик çĕрĕн паллă хисепне тÿлевсĕр ĕçлеттернĕ. Çавна вара „отработкăсем", „барщинă", тенĕ. Пуринчен ытларах хресченĕн çĕре тара илнĕшĕн помещике ирĕксĕрех çав çĕртен илнĕ тырпултан çурри чухлĕ тÿлемеле пулнă. Çакна вара „çурмала" ĕç, тенĕ.

Çапла ĕнтĕ, хресченĕн пурнăçĕ крепостной правă чухнехи майлах тăрса йулнă, унăн уйрăмлăхĕ çакăнта кăна пулнă: халĕ хресчен хăй ирĕклĕ пулнă, ăна йапалана сутса илнĕ пек сутса илме пулман.

Помещиксем кайа йулнă хресченсен хуçалăхĕнчен тĕрлĕ вăрă-хурахла майсемпе (тара пани, штрафсем) йулашки сĕткене пăчăртаса кăларса пынă. Хресченсен тĕп масси помещиксем пусмăрланă пирки хăйĕн хуçалăхне лайăхлатса пыма пултарайман. Çавăн пирки револ̆уцичченхи Роççийăра йалхуçалăхĕ питех те кайа йулнă, вăл час-часах тыră пулманнисем тата выçлăхсем патне илсе пынă.

Крепостникла хуçалăх йулашкисем, хырçăсем пысăк пулни тата помещиксене çĕр укçи пит нумай тÿлемеле пулни,—вĕсем час-часах хресчен хуçалăхĕн тупăшĕнчен пысăкрах пулнă,—хресченсен массисене йухăнтарса, çукăлха кăларса пынă, хресченсене ĕçлесе укçа тупма йалтан пăрахса кайма хĕтĕртнĕ. Вĕсем хапрăксемпе савăтсене кайнă. Фабрикантсем йÿнĕ ĕç вăйĕ илсе тăнă.

Рабочисемпе хресченсем çинче исправниксен, урйадниксен, жандармсен, полицейскисен, стражниксен пысăк çарĕ тăнă, вĕсем патшана, капиталиссене, помещиксене ĕççыннисенчен, експлоатациленекенсенчен сыхласа тăнă. 1903 çулччен хĕнес-çапас йĕрке пулнă. Крепостной правăна пăрахăçа кăларнă пулин те, хресченсене пĕчĕк айăпшăнах, хырçă тÿлеменшĕн розгăпа хĕненĕ. Рабочисене полиципе казаксем хĕненĕ, уйрăмăнах стачкăсем вăхăтĕнче, рабочисем фабрикантсем хĕсĕрленине чăтаймасăр ĕçлеме пăрахнă чухне хĕненĕ. Рабочисемпе хресченсен патша Роççийĕнче нимĕнле политикăлă права та пулман. Патша самодержавийĕ халăхăн хайар тăшманĕ пулнă.

Патша Роççийĕ халăхсен тĕрми пулнă. Патша Роççийĕнчи нумай йышлă вырăсмар халăхсем пачах правасăр пулнă, вĕсенчен вĕçĕмсĕр мăшкăланă, кÿрентернĕ. Патша правительстви вырăс халăхне нациллĕ облăçсенчи тĕп халăхсем çине кĕçĕн расă çине пăхнă пек пăхма вĕрентсе пынă, вĕсене официал̆нă „инородĕцсем" тенĕ, вĕсенчен йĕрĕнсе кураймасăр пурăнма вĕрентнĕ. Патша правительстви национал̆năçсем хушшинче йуриех хирĕçÿ кăларса пынă, пĕр халăха тепĕр халăхпа вăрçтарнă, йеврейсем хушшинче погромсем, Закавказйере тутарсемпе армйансем хушшинче çапăçусем организациленĕ.

Нациллĕ облăçсенче государства ĕçĕсенче пуриччен те йе пуриччен те пекех вырăс чиновникĕсем ларнă. Учрежденисенче, судсенче пур ĕçсене те вырăс чĕлхипе туса тăнă. Национал̆năçсен чĕлхипе хаçатсемпе кĕнекесем кăларма чарнă пулнă, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕренме чарнă. Патша правительстви нациллĕ кул̆турă кирек мĕнле палăрнине те пăвса лартма тăрăшнă, вырăсмар национал̆năçсене вăйпах „вырăслатас" политикăна тытса пынă. Патша йĕрки вырăсмар халăхсен палачĕ тата [illegible] пулнă.

Крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн, Роççийăра промышлĕннăйлă капиталисăм аталанăвĕ, çав аталанăва çаплах чарса тăракан крепостничĕствă йулашкисем пулнă пулин те, чылай хăвăртăн малала кайнă. 25 çул хушшинче, 1865 çултан 1890 çула çитиччен, пĕр шултра хапрăксемпе савăтсенче тата чукунçулсем çинче кăна ĕçлекен рабочисен хисепĕ 706 пинрен 1.433 пине çитнĕ, урăхла каласан, икĕ хут ытларах ÿснĕ.

Роççийăра капиталисăмла шултра промышлĕннăç 90-мĕш çулсенче тата хăвăртрах аталанма пуçланă. 90-мĕш çулсен вĕçĕнче шултра хапрăксемпе савăтсенче, çăрт-ту промышлĕннăçĕнче, чукунçулсем çинче ĕçлекен рабочисен хисепĕ Йевропăри Роççийăн 50 кĕпĕрнийĕ тăрăх кăна 2.207 пине, пĕтĕм Роççийĕпе—2.792 пине çитнĕ.

Çакă вăл кучухнехи промышлĕннăй пролетариат пулнă, вăл капиталисла пысăк предприйатисенче пĕтĕçсе тăнипе те, çавăн пекех хăйĕн паттăр револ̆уцилĕ пахалăхĕпе те крепостной тапхăрти хапрăксенчи рабочисенчен, вакă, кустарнăй тата ытти тĕрлĕ промышлĕннăçри рабочисенчен тĕпренех урăхла пулнă.

Промышлĕннăçăн 90-мĕш çулсенчи çĕкленĕвĕ чи малтан чукунçул строительстви вăйлăн пынипе çыхăнса тăнă. Вунă çул хушшинче (1890—1900 çулсем) 21 пин çухрăм ытла çĕнĕ чукунçулсем тунă. Чукунçулсем вал̆л̆и (рел̆сăсем, паровозсем, вагонсем тума) питĕ нумай металл кирлĕ пулнă, ытларах та ытларах хутмалисем, çĕр кăмрăкĕ тата нефт̆ кирлĕ пулнă. Çакă ĕнтĕ металлургипе хутмалисен промышлĕннăçĕ вăйланасси патне илсе пынă.

Мĕнпур капиталисăмла çĕршывсенчи пекех, револ̆уцичченхи Роççийăра та промышлĕннăç çĕкленĕвĕн çулĕсем промышлĕннăç кризисĕсен çулĕсемпе, промышлĕннăç пĕр вырăнта тăнă çулсемпе улмашса пынă, вĕсем рабочи класа йăваррăн пырса тивнĕ, çĕршер пин рабочисене ĕççĕрлĕхе тата çуклăха кăларнă.

Крепостной правăна пăрахăçа кăларнă хыççăн Роççийăра капиталисăм аталанăвĕ чылайах хăвăрт малала пынă пулин те, Роççийă хăйĕн економикăлă аталанăвĕнче ытти капиталисăмлă çĕршывсенчен питех те йулса пынă. Халăхăн нумай пысăк пайĕ çаплах йалхуçалăхĕнче ĕçлесе пурăннă. Ленин хăйĕн „Развитие капитализма в России" йатлă чаплă кĕнекинче 1897 çулта пулса иртнĕ пĕтĕм халăх переписĕн паха цифрисене илсе кăтартнă. Çавăнтан акă мĕн курăннă: пĕтĕм халăхăн ултă пайĕнчен пилĕк пайĕ йалхуçалăхĕнче ĕçленĕ, шултра тата вакă промышлĕннăçра, сутуилÿре, чукунçул çинче, шыв транспорчĕнче, строительствăра, вăрман ĕçĕнче хатĕрлес ĕçре тата ытти çĕрте те халăхăн ултă пайĕнчен пĕр пайĕ кăна ĕçлесе пурăннă.

Çакă ĕнтĕ, Роççийăра капиталисăм аталаннă пулин те, вăл çĕршыв, економика тĕлĕшĕнчен кайа йулнă çĕршыв, вакбуржуалă çĕршыв пулнине, урăхла каласан, вак харпăрлăхла, сахал туса кăларакан уйрăм хресчен хуçалăхлă çĕршыв пулса тăнине кăтартса парат̆.

Капиталисăм аталанăвĕ хуларта кăна мар, йалта та пулса пынă. Револ̆уцичченхи Роççийăри чи нумай йышлă клас пулнă хресченсем вакланса, сийленсе пынă. Йалта пуйантарах хресченсенчен кулаксен сийĕ, йалти буржуази уйрăлса тухса пынă, тепĕр йенчен, хресченсем нумайăшĕ йухăнса пынă, чухăн хресченсен, йалти пролетарисемпе çурмапролетарисен йышĕ пысăкланса пынă. Вăтам хресченсен йышĕ вара çулран çулах чакса пынă.

1903 çулта Роççийăра 10 миллион киле йахăн хресченсем пулнă. Хăйĕн „К деревенской бедноте" йатлă брошÿринче Ленин çав килсен шутĕнчен виçĕ миллион çурăран кайа мар килĕ лашасăр хресченсем пулнине шутласа палăртнă.

Çак ытла та чухăн хресченсен килĕсем йаланах пĕчĕк çĕр татăкне çеç акса тăнă, ытти çĕрне вара кулаксене тара панă, хăйсем ĕçлесе укçа тупма туха-туха кайнă. Хăйсен пурнăçĕ тĕлĕшпе чухăн хресченсем пуринчен ытла пролетариат патне çывăхрах тăнă. Ленин вĕсене йалти пролетарисем йе çурмапролетарисем, тенĕ.

Тепĕр йенчен, пуйансен, кулакла хресченсен миллион çурă килĕсем (10 миллион килсен пĕтĕм хисепĕнчен) хăйсен аллине хресченсем акакан мĕнпур çĕртен çуррине йарса илнĕ. Çак хресченле буржуази, чухăнсемпе вăтам хресченсене хĕсĕрлесе, батраксен тата кун тăрăх кĕрĕшсе ĕçлекенсен ĕçĕнчен тупăш илсе, йалхуçалăхĕнчи капиталиссем пулса кайса, пуйса пынă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчех те ĕнтĕ тата уйрăмăнах 80-мĕш çулсенче Роççийăри рабочи клас вăранма пуçланă та капиталиссене хирĕç кĕрешме тытăннă. Патша Роççийĕнче рабочисен пурнăçĕ калама çук йăвăр пулнă. 80-мĕш çулсенче хапрăксемпе савăтсенче ĕç кунĕн тăршшĕ $12^1/_2$ сехетрен кайа мар пулнă, пир-авăр промышлĕннăçĕнче 14—15 сехете те çитнĕ. Хĕрарăмсемпе ачасен ĕçне експлуатацилессипе анлăн усă курнă. Çитĕнсе çитнисем миçе сехет ĕçленĕ, ачасем те çавăн чухлех ĕçленĕ, анчах ĕç укçине, хĕрарăмсем пекех, чылай сахал илнĕ. Ĕç укçине ытла та сахал панă. Рабочисен пысăк пайĕ уйăхне 7—8 тенкĕ илнĕ. Тимĕр-тăмăр йапаласем тăвакан тата шăратакан савăтсенчи чи хаклă ĕç укçи илекен рабочисем те уйăхне 35 тенкĕрен ытла илеймен. Ĕçлеве нимĕнле сыхласси те пулман, ку вăл рабочисем массăлăн суранланасси тата вилесси патне илсе пынă. Рабочисене страхлани пулман, медицинăлă пулăшăва укçала кăна панă. Пурăнмали çурт-йĕр йенĕпе условисем ытла та йăвăр пулнă. Пĕчĕк „пÿлĕмсенче", рабочисен казармисенче 10—12 çын рабочисем пурăннă. Фабрикантсем рабочисене ĕç укçи тÿленĕ чухне час-часах улталанă, апат-çимĕçсене хуçа лавкисенчен виçĕ хут пысăкрах хакпа илтернĕ, штрафсем хурса рабочисене çаратнă.

Рабочисем пĕр-пĕринпе калаçса татăлса тата пĕрлешсе хапрăк, савăт хуçинчен хăйсен тÿсме çук йăвăр пурнăçне лайăхлатма ыйтма тытăннă. Вĕсем ĕçлеме пăрахнă, урăхла каласан, стачкă, забастовкă туса пынă. 70-мĕш тата 80-мĕш çулсенчи малтанхи забастовкăсем йаланах ытла пысăк штрафсем хунă пирки, рабочисене ĕç укçи панă чухне улталаса çаратнă пирки, ĕç хакне чакарнă пирки пулса пынă.

Тарăхса çитнĕ рабочисем малтанхи забастовкăсем вăхăтĕнче хăшпĕр чухне машинăсене çĕмĕрнĕ, хапрăк çурчĕсен кантăкĕсене ватнă, хуçан лавкисемпе кантурĕсене аркатса тăкнă.

Малта пыракан рабочисем капиталиссене хирĕç ăнăçулăн кĕрешсе пыма организаци кирлине ăнланса илме пуçланă. Рабочисен сойузĕсем шăтса тухма тытăннă.

1875 çулта Одессăра „Южно-российский союз рабочих" организациленнĕ. Рабочисен çак пирвайхи организацийĕ 8—9 уйăх хушши пурăннă, унтан ăна патша правительстви çĕмĕрсе тăкнă.

Петербургра 1878 çулта „Северный союз русских рабочих" организациленнĕ, унăн пуçĕнче Халтурин стол̆арпа Обнорский слесăр тăнă. Çак сойузăн программинче çапла каланă пулнă: сойуз хăйĕн задачисемпе хĕвеланăçĕнчи социал-демократла рабочи партисемпе пĕр майлă, тенĕ. Сойузăн чи пысăк ĕмĕчĕ социалисăмлă револ̆уци тăвасси—„государствăн пачах тĕрĕслĕхсĕр стройне, политикăлă тата економикăлă стройне сирпĕтсе антарасси" пулнă. Сойуз организатăрĕсенчен пĕри—Обнорский пĕр вăхăтра йут çĕршывра пурăннă, унта марксисла социал-демократла партисен тата Маркс йертсе пыракан I Интернационалăн ĕçĕсемпе паллашнă. Çакă вăл „Северный союз русских рабочих" программинче те палăрнă. Çак сойуз хăйĕн çывăхри задачи вырăнне халăх вал̆л̆и политикăлă ирĕклĕх тата политикăлă права (сăмах, пичет ирĕклĕхĕ, пухусен прави тата ыт. те) çĕнтерсе илессине лартнă. Çывăхри требованисен шутĕнче ĕç кунне ÿстерме чарасси те пулнă.

Сойуз членĕсен шучĕ 200 çынна çитнĕ, тата çавăн чухлех сочувствуйушчисем пулнă. Сойуз рабочисен стачкисене хутшăнма пуçланă, вĕсене йертсе пынă. Патша правительстви рабочисен çак сойузне те çĕмĕрсе тăкнă.

Анчах рабочисен йухăмĕ çĕнĕрен те çĕнĕрен районсене çавăрса илсе, малалла ÿссе пынă. 80-мĕш çулсенче стачкăсем нумай пулнă. Пилĕк çул хушшинче (1881—1886 çулсем) 48 стачкă ытла пулнă, вĕсене 80 пин рабочи хутшăннă.

Револ̆уцилĕ йухăмăн историнче 1885 çулта Орехово-Зуйевăра Морозăв хапрăкĕнче пулнă пысăк стачкă уйрăмăнах пысăк вырăн йышăнса тăнă.

Çак хапрăкра 8 пине йахăн рабочи ĕçленĕ. Ĕç условисем кунран куна начарланса пынă: 1882 çултан пуçласа 1884 çула çите ĕç укçине пилĕк хут чакарнă, çитменнине 1884 çулта ĕç хакне тÿрех пĕр чĕрĕк чухлĕ, урăхла каласан, 25 процент чухлĕ чакарнă. Анчах кунсăр пуçне тата фабрикант Морозăв рабочисене штрафсемпе асаплантарса çитернĕ. Стачкă хыççăн судра çакă палăрнă: штрафсен утĕмĕпе рабочирен ĕçлесе илнĕ кашни пĕр тенкĕ пуçне фабрикант вал̆л̆и 30 пусран 50 пус таран тыта-тыта йулнă. Çакан пек çаратнине рабочисем тÿсме пултарайман. 1885 çулти йанварте вара стачкă пуçласа йанă. Стачкă тăвассине малтанах организациленĕ. Ăна малта пыракан рабочи Петр Моисейенко йертсе пынă, вăл унччен „Северный союз русских рабочих" членĕ пулнă, унăн ĕнтĕ револ̆уцилĕ опыт та пулнă. Стачкă тăвас умĕн Моисейенко ытти ăнланулăрах ткачсемпе пĕрле фабрикант умне требованисем кăларса тăратма хатĕрленĕ, вĕсене рабочисен вăрттăн канашлăвĕнче çирĕплетнĕ. Пуринчен малтан рабочисем вăрă-хурахла штрафсене пĕтерсе лартма ыйтнă.

Çак стачкăна хĕçпăшаллă вăйпа путарса лартнă. Рабочисене 600 çын ытла арĕсленĕ, вĕсенчен темиçе вунă çынна суда панă.

Çакнашкал стачкăсем 1885 çулта Иваново-Вознесенскри хапрăксенче те пулнă.

Тепĕр çулне рабочисен йухăмĕ ÿссе пынинчен хăраса ÿкнĕ патша правительствин ирĕксĕрех штрафсем çинчен саккун кăлармала пулнă. Çав саккун тăрăх, штраф укçисем фабрикант кăсйине мар, рабочисен нушисене витме каймала пулнă.

Морозăв хапрăкĕнчи тата ытти стачкăсен опычĕ тăрăх, рабочисем организациленсе кĕрешнипе вĕсем нумай çĕнсе илме пултарассине ăнланса илнĕ. Рабочисен йухăмĕ хăйĕн хушшинчен рабочи класăн интересĕсемшĕн хытă тăракан пултарулă руководителсемпе организатăрсем хатĕрлесе кăларма пуçланă.

Çав вăхăтрах рабочисен йухăмĕ ÿснĕ никĕс çинче тата Хĕвеланăç Йевропăри рабочисен йухăмĕн влийанийĕпе Роççийăра пирвайхи марксисла организацисем пулса пыма тытăнаççĕ.

### 2. Народничĕствă тата марксисăм Роççийăра. Плеханăв тата унăн „Освобождение труда" йатлă группи. Плеханăв народничĕствăна хирĕç кĕрешни. Марксисăм Роççийăра сарăлса пыни.

Марксисла группăсем пуçланса кайиччен Роççийăра револ̆уцилĕ ĕçе народниксем туса пынă, вĕсем марксисăмăн противникĕсем пулнă.

Вырăссен пирвайхи марксисла группи 1883 ç. пуçланса кайнă. Çакă вăл „Освобождение труда" группă пулнă, ăна Г. В. Плеханăв йутçĕршывра, Женевăра, организациленĕ; унăн йутçĕршыва револ̆уцилĕ ĕçсем тунăшăн патша правительстви хĕсĕрленĕ пирки кайма тивнĕ.

Унччен Плеханăв хăй те народник пулнă. Емиграцире марксисăмпа паллашсан, вăл народничĕствăран уйрăлса кайнă, марксисăмăн питех те паллă пропагандисĕ пулса тăнă.

„Освобождение труда" группă Роççийăра марксисăма сарса пырас тĕлĕшпе пысăк ĕç туса иртернĕ. Вăл Маркспа Енгĕл̆сăн: „Манифест коммунистической партии", „Наемный труд и капитал", „Развитие социализма от утопии к науке" тата ытти кĕнекесене те вырăсла куçарнă, вĕсене йутçĕршывра пичетлесе кăларнă та Роççийăра вăрттăн сарма тытăннă. Г. В. Плеханăв, Засулич, Аксел̆род тата çав группăра тăракансем ыттисем те чылай произведенисем çырса кăларнă, унта вĕсем Маркспа Енгĕл̆с вĕрентĕвне ăнлантарса панă, **научнăй социалисăм** идейисене ăнлантарнă.

Маркспа Енгĕл̆с, пролетариатăн аслă учителĕсем, социалис-утописсем вĕрентнине хирĕç тăрса, чи пирвай çакна ăнлантарса панă: социалисăм вăл — ĕмĕтленекен стемсем (утописсем) шутласа кăларнă йапала мар, кучухнехи капиталисăмлă обшчĕствă аталанăвĕн пурпĕрех пулмали результачĕ. Вĕсем капиталисăмлă йĕрке те, крепостной йĕрке пĕтнĕ пекех, пĕтессине, капиталисăм хăйне пĕтерекене, пролетариата, хăйех тунине кăтартса панă. Вĕсем—пролетариатăн класлă кĕрешĕвĕ кăна, пролетариат буржуазине çĕнтерни кăна етемлĕхе капиталисăмран, експлуатацирен хăтарассине кăтартса панă.

Маркспа Енгĕл̆с пролетариата хăйĕн вăйне ăнланса илме, хăйĕн класлă интересĕсене ăнланса тăма тата буржуазине хирĕç татăклăн кĕрешмешкĕн пĕрлешме вĕрентнĕ. Маркспа Енгĕл̆с капиталисăмлă обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене тупса уçнă тата капиталисăмлă обшчĕствă аталанăвĕ тата вăл обшчĕствăри клас кĕрешĕвĕ пурпĕрех капиталисăм пĕтесси патне, пролетариат çĕнтересси патне, **пролетариат диктатури** патне илсе пырассине наукă йенчен çирĕплетсе кăтартса панă.

Маркспа Енгĕл̆с çапла вĕрентнĕ: капитал влаçĕнчен хăтăлма тата капиталисăмлă харпăрлăхран обшчĕствăлă харпăрлăх туса хума мирлĕ çулпах май килмест, рабочи клас çакна буржуазине хирĕç револ̆уцилĕ ирĕксĕрленипе усă курса кăна, *пролетарилĕ револ̆уци* урлă кăна, рабочи клас хăй политикăлă пуçлăхлăха илни—пролетариат диктатурине туса хуни урлă кăна кĕрешсе илме пултарат̆, пролетариат диктатури експлуататăрсем хирĕç тăнине путармала тата çĕнĕ, классăр, коммунисăмлă обшчĕствă тумала.

Маркспа Енгĕл̆с çапла вĕрентнĕ: промышлĕннăй пролетариат чи револ̆уцилĕ клас, çавăнпа та—капиталисăмлă обшчĕствăн чи малта пыракан класĕ пулса тăрат̆, çавăн пек рабочи клас кăна, пролетариат пек клас кăна, капиталисăмпа килĕшмен вăйсене пурне те хăй тавра пухса, вĕсене капиталисăма штурмлама илсе кайма пултарат̆. Анчах кивĕ тĕнчене çĕнтерсе çĕнĕ классăр обшчĕствă тăвас тесен, пролетариатăн хăйĕн рабочи партийĕ пулмала, вăл партине Маркспа Енгĕл̆с коммунисла парти, тенĕ.

Маркспа Енгĕл̆с шухăшĕсене сарса пынă та ĕнтĕ вырăссен пирвайхи марксисла группи, Плеханăв тунă „Освобождение труда" группă.

„Освобождение труда" группă, Роççийăра социал-демократла йухăм пулман чухнех, вырăссен йутçĕршыври пичетĕнче марксисăм йалавне çĕкленĕ. Çак йухăм вал̆л̆и, нимĕнрен малтан, теори тĕлĕшпе, идейă тĕлĕшпе çул хывмала пулнă. Марксисăма сарса пырас ĕçĕн тата социал-демократла йухăмăн çулĕ çинчи идейăллă тĕп чăрмав вăл вăхăтра народникла шухăшсем пулнă, çак шухăшсем малта пыракан рабочисемпе револ̆уцилĕ шухăш-кăмăллă интеллигенци хушшинче ытларах пулнă.

Роççийăра капиталисăм аталаннă май, рабочи клас малта пыракан, револ̆уцилĕ кĕрешĕве организацилĕ туса пыма пултаракан хăватлă вăй пулса пынă. Анчах рабочи класăн малта пырас ролĕне народниксем ăнланман. Вырăс народникĕсем: малта пыракан револ̆уцилĕ вăй—рабочи клас мар, хресченсем пулса тăраççĕ, патшапа помещиксен влаçне пĕр хресченсен „бунчĕсем" урлă çеç те сирпĕтсе антарма пулат̆, тесе йăнăш шутланă. Народниксем рабочи класа пĕлмен, хресченсем рабочи класпа сойуз тытмасăр тата рабочи клас руководствисăр хăйсем кăна патша йĕркине тата помещиксене çĕнтерме пултарайманнине вĕсем ăнланман. Народниксем рабочи клас обшчĕствăн чи револ̆уцилĕ тата чи малта пыракан класĕ пулнине ăнланман.

Малали 3-мĕш страницăра

# М А Л А Л И

Народниксем малтан патша правительствине хирӗç кӗрешме хресченсене çӗклеме хӑтланнӑ. Çак шутпа интеллигенцин революцилӗ çамрӑкӗсем хресчен тумтирӗсене тӑхӑнса, йалсене—унчухнехи пек калаçан, „халӑх хушшине" („в народ") кайма тытӑннӑ. Çакӑнтан пуçланса кайнӑ та ӗнтӗ „народниксем" тенӗ йат. Анчах вӗсем хыççӑн хресченсем кайман, мӗншӗн тесен вӗсем хресченсене кирлӗ пек пӗлмен те, ӑнланман та. Народниксене нумайӗшне полици ӑрӗслесе пӗтернӗ. Çакӑн хыççӑн народниксем патша самодержавине хирӗç пӗр хӑйсен вӑйӗсемпе кӑна, халӑхсӑрах, кӗрешсе пыма шутланӑ, çакӑ вара пушшех те пысӑк йӑнӑшсем патне илсе пынӑ.

Народниксен вӑрттӑн обществи „Народная воля" патшана вӗлерме хатӗрленме пуçланӑ. 1881 çулхи мартӑн 1-мӗшӗнче народовольцӗсем Александр II патшана бомбӑ пӑрахса вӗлерме пултарнӑ. Анчах та çакӑ вӑл халӑха нимӗнле усӑ та паман. Уйрӑм çынсене вӗлернипе патша самодержавине сирпӗтсе антарма, помещиксен класне пӗтерме пулман. Вӗлернӗ патша вырӑнне тепӗр патша—Александр III сиксе тухнӑ, çак патша вӑхӑтӗнче рабочисемпе хресченсене пусӑрнма татах та йӑвӑр пулнӑ.

Патша йӗркине хирӗç кӗрешме народниксем суйласа илнӗ çул—уйрӑм çынсене вӗлерни урлӑ, индивидуаллӑ террор урлӑ кӗрешесси революцишӗн йӑнӑш та сийенлӗ çул пулнӑ. Индивидуаллӑ террор политики тӗп—„активлӑ" геройсем çинчен тата „геройсенчен" чаплӑ ӗç тума кӗтекен пассивлӑ „толпа" çинчен калакан тӗрӗс мар, народникла теорирен тухса тӑнӑ. Çак суйа теори тӑрӑх уйрӑм, питех те паллӑ пӗчӗк çынсем кӑна истори тӑваççӗ, массӑ, халӑх, клас, „толпа",—çакӑн пек йӗрӗнсе каланӑ унчухне народникла писательсем,—ӑстӑнлӑ, организацилӗ ӗçсем тума пултараймасть, вӑл „геройсем" хыççӑн суккӑр çын пек кӑна пыма пултарать. Çавӑнпа та народниксем хресченсемпе рабочи клас хушшинче массӑллӑ революцилӗ ӗç пӑрахса, индивидуаллӑ террор çине куçнӑ. Народниксем унчухнехи чи пысӑк революционерсенчен пӗрне—Степан Халтурина революцилӗ рабочи союз организацилес ӗçе пӑрахтарса пӗтӗмпех террор çине куçарнӑ.

Пусмӑрласа пурӑнакан класӑн уйрӑм представителӗсене вӗлернипе революцишӗн усӑсӑр ӗç туса пырса, народниксем ӗççыннисене çав класа хирӗç кӗрешес çӗртен айаккала пӑрса пынӑ. Вӗсем рабочи класӑн тата хресченсен революцилӗ пуçарулӑхӗпе активлӑхӗ аталанассине чарса тӑнӑ.

Народниксем рабочи класа вӑл хӑй революцире йӗртсе пырас рольне ӑнланса илме чӑрмантарнӑ, рабочи класӑн хӑйне уйрӑм партине тума чарса пынӑ.

Народниксен вӑрттӑн организацине патша правительстви çӗмӗрсе тӑкнӑ пулин те, народникла шухӑшсем революцилӗ шухӑш-кӑмӑллӑ интеллигенци хушшинче нумайччен тытӑнса тӑнӑ. Народниксен йулашкийӗсем Российӑра марксизма сарса пырассине хирӗç питех те хытӑ тӑнӑ, рабочи класа организацилессине чӑрмантарса пынӑ.

Çавӑнпа та марксизм Российӑра народничествӑна хирӗç кӗрешсе пынипе çеç ӳссе çирӗпленме пултарнӑ.

„Освобождение труда" группӑ народниксен йӑнӑш шухӑшӗсене хирӗç кӗрешӳ сарса йанӑ, народниксен вӗрентӗвӗпе вӗсен кӗрешӗвӗн меслечӗсем рабочи ен йухӑмне мӗнле сийен кӳнине кӑтартса панӑ.

Плеханӑв хӑйӗн народниксене хирӗç çырнӑ кӗнекисенче, народниксен шухӑшӗсемпе научнӑй социализм хушшинче, народниксем хӑйсене социалистсем тесçӗ пулин те, нимӗн те пӗрлехи çуккине кӑтартса панӑ.

Плеханӑв народниксен йӑнӑш шухӑшӗсене чи пуçласа марксисла критикӑ панӑ. Плеханӑв народникла шухӑшсене çав тери тӗл çапа-çапа çӗмӗрнӗ, çав вӑхӑтрах тата марксисла шухӑшсене питех те лайӑх хӳтлесе пынӑ.

Мӗнре пулнӑ-ха народниксен Плеханӑв пӗтермелӗх çӗмӗрсе тӑкнӑ тӗп йӑнӑш шухӑшӗсем?

Пӗрремӗшӗнчен, народниксем: капитализм вӑл Российӑра „ӑнсӑртран" пулнӑ йапала, Российӑра капитализм аталанас çук, çапла вара, пролетариат та çитӗнсе аталанас çук, тенӗ.

Иккӗмӗшӗнчен, народниксем рабочи класа революцире малта пыракан клас тесе шутламан. Вӗсем пролетариатсӑрах социализм патне çитме ӗмӗтленнӗ. Народниксем тӗп революцилӗ вӑй тесе, интеллигенци йӗртсе пыракан хресченсене тата хресченсен общинине шутланӑ, çав общинӑна вӗсем социализм пуçламӑшӗ, социализм никӗсӗ вырӑнне хунӑ.

Виççӗмӗшӗнчен, народниксем пӗтӗм етемлӗхӗн историйӗ аталанса пыни тӗлӗшпе йӑнӑш та сийенлӗ шухӑш пулма. Вӗсем обществӑн економикӑлӑ тата политикӑлӑ аталанӑвӗн саккунӗсене пӗлмен те, ӑнланман та. Ку тӗлӗшпе вӗсем пачах кайа йулнӑ çынсем пулнӑ. Вӗсен шучӗпе, историйе классем мар, классен кӗрешӗвӗ мар, уйрӑм паллӑ çынсем—„геройсем" çеç тӑваççӗ, вӗсем хыççӑн массӑсем, „толпа", халӑх, классем суккӑр çын пек пыраççӗ.

Народниксене хирӗç кӗрешсе пырса тата вӗсене тӑрӑ шыв çине кӑларса, Плеханӑв марксисла кӗнекесем чылай çырнӑ, вӑл кӗнекесем тӑрӑх Российӑри марксиссем вӗренсе воспитани илсе пынӑ. Плеханӑвӑн: „Социализм и политическая борьба", „Наши разногласия", „К вопросу о развитии монистического взгляда на историю" кӗнекисем Российӑра марксизм çӗнтерме çул уçса панӑ.

Плеханӑв хӑйӗн кӗнекисенче марксизмӑн тӗп ыйтӑвӗсем çинчен çырса панӑ. Унӑн „К вопросу о развитии монистического взгляда на историю" йатлӑ кӗнеки уйрӑмах пысӑк пӗлтерӗшлӗ пулнӑ, ӑна 1895 çулта пичетлесе кӑларнӑ. Ленин: çак кӗнеке тӑрӑх „вырӑс марксисӗсен пӗтӗм ӑрӑвӗ воспитани илнӗ" тесе кӑтартса панӑ" (Ленин т. XIV, 347 стр.).

Плеханӑв хӑйӗн народниксене хирӗç çырнӑ кӗнекисенче ыйтӑва народниксем пек: Российӑра капитализм аталанмала-и йе аталанас çук-и?—тесе лартни киревсӗр пулнине кӑтартса панӑ. Ӗç çакӑнта, тенӗ Плеханӑв фактсемпе кӑтартса парса: Российӑ капитализм çулӗ çине тухрӗ ӗнтӗ, ӑна çав çул çинчен пӑрса йама пултаракан вӑй çук.

Революционерсен задачи—Российӑра капитализм аталаннине тытса чарассинче мар пулнӑ, ӑна вӗсем пурпӗрех чарма пултарайман пулӗччӗç. Революционерсен задачи—капитализм аталаннӑ май çуралса пыракан хӑватлӑ революцилӗ вӑй çине, рабочи клас çине тайӑнса ӗçлессинче пулнӑ, унӑн класлӑ ӑстӑнне аталантарассинче, ӑна организацилессинче, ӑна хӑйӗн рабочи партине тума пулӑшассинче пулнӑ.

Плеханӑв народниксен иккӗмӗш тӗп йӑнӑш шухӑшне те—вӗсем пролетариатӑн революцилӗ кӗрешӳри малти вырӑнне йышӑнманнине те çапса салатнӑ. Народниксем Российӑра пролетариат пуçланса кайнине хӑйне майлӑ „историлӗ телейсӗрлӗх" вырӑнне хунӑ, „пролетариатствӑ вӑл—йухан-суран", тесе çырнӑ. Плеханӑв марксизм вӗрентӗвне тата унпа Российӑра та пӗтӗмпех усӑ курма пулнине хӳтлесе, хресченсем хисеп йенчен нумайтарах, пролетариат, вӗсемпе танлаштарсан, сахал йышлӑ пулин те,—революционерсен именнӗ çав пролетариат çине, вӑл ӳссе пыни çине çирӗп шанса тӑмалине кӑтартса панӑ.

Мӗншӗн именнӗ пролетариат çине шанса тӑмала?

Мӗншӗн тесен, пролетариат, хальхи вӑхӑтра вӑл сахал йышлӑ пулин те, ӗççыннисен çакнашкал класӗ пулса тӑрать: вӑл хуçалӑхӑн чи малта тӑракан формипе,—шултра производствӑпа çыхӑнса тӑрать, çакна пула пролетариатӑн пысӑк пуласлӑх пур.

Мӗншӗн тесен, пролетариат, клас тӗлӗшпе, çулран çул ӳсет, политикӑ йенчен аталанать, шултра производствӑри ӗç условийӗсене пула ӑна организацилеме çӑмӑл, хӑйӗн пролетарилӗ лару-тӑруне пула вӑл питех те революцилӗ, мӗншӗн тесен унӑн, революцире хӑйӗн сӑнчӑрӗсене çухатнисӗр пуçне, нимӗн те çухатмали çук.

Хресченсем тӗлӗшпе ӗç урӑхла тӑрать.

Хресченсем (сӑмах кунта йединоличник хресченсем çинчен пынӑ.—Ред.), вӗсем нумай йышлӑ пулнӑ пулин те, ӗççыннисен çакнашкал класӗ пулса тӑраççӗ: вӗсем хуçалӑхӑн чи кайа йулнӑ формипе,—вак производствӑпа çыхӑнса тӑраççӗ, çакна пула хресченсен пысӑк пуласлӑх çук, пулма та пултараймасть.

Хресченсем, клас тӗлӗшпе, ӳссе пымаççӗ кӑна мар, йӑлтах урӑхла, çулран çулах вӗсем буржуази (кулаксем) çине тата чухӑнсем (пролетарисем, çурмапролетарисем) çине саланса пыраççӗ. Çитменнине тата, хресченсем сапаланса пурӑннӑ пирки, вӗсене организацилеме йӑвӑртарах, хӑйсен вак харпӑрлӑхлӑ лару-тӑруне пула, вӗсем революцилӗ йухӑма пролетариат пек хаваслансах каймаççӗ.

Народниксем Российӑра социализм пролетариат диктатури урлӑ мар, хресченсен общини урлӑ килет, тенӗ; общинӑна вӗсем социализм пуçламӑшӗ тата никӗсӗ, тесе шутланӑ. Анчах общинӑ социализмӑн никӗсӗ те, пуçламӑшӗ те пулман, пулма та пултарайман, мӗншӗн тесен общинӑра чухӑнсене, батраксене, вӑйсӑр хуçалӑхлӑ вӑтамсене експлуатацилекен кулаксем, „кӗрамсырсем" пуç пулса тӑнӑ. Çӗре формаллӑ общинӑлла йӗркепе тытса тӑни тата ӑна вӑхӑтран вӑхӑта йат тӑрӑх валеçни ӗçе нимӗн чухлӗ те улӑштарман. Общинӑ членӗсенчен—камӑн ӗç вылӑхӗсем, ӗç хатӗрӗсем, вӑрлӑхсем пулнӑ, çавсем кӑна, урӑхла каласан, пуйан вӑтамсемпе кулаксем кӑна çӗрпе усӑ курнӑ. Лашасӑр хресченсен, чухӑнсен тата вӑйсӑр хуçалӑхлӑ хресченсен пурин те хӑйсен çӗрӗсене кулаксене пама тивнӗ, хӑйсен тара кӗрӗшсе ӗçлемеле пулнӑ, батрака каймала пулнӑ. Чӑннипе хресченсен общини кулаксен пусмӑрне витсе тӑмалли лайӑх формӑ пулнӑ, патша йӗрки аллинче вӑл пӗриншӗн пурте (круговая порука), тенӗ принцип тӑрӑх хресченсенчен налогсем пухмашкӑн çӑмӑл май пулнӑ. Çавӑнпа та ӗнтӗ патша йӗрки хресченсен общинине тивмен. Çавнашкал общинӑна социализм пуçламӑшӗ йе никӗсӗ тесе шутлани кулӑшла пулнӑ пулӗччӗ.

Плеханӑв çавнашкалах тата народниксен виççӗмӗш тӗп йӑнӑш шухӑшне те—обществӑ аталанӑвӗнче „геройсен", паллӑ çынсен ролӗ, вӗсен идейисем малти вырӑнта пулни çинчен тата массӑн, „толпан", халӑхӑн, классен ролӗ питех те пӗчӗк пулни çинчен калакан шухӑша та çапса салатнӑ. Плеханӑв, тӗрӗслӗх идеализм йенче мар, Маркс—Енгельс материализмӗ йенче пулнине кӑтартса парса, народниксене идеализмшӑн айӑпланӑ.

Плеханӑв марксисла материализм шухӑшӗсене аталантарса никӗслесе панӑ. Марксисла материализм тӑрӑх, вӑл обществӑ аталанӑвӗ, йулашки шутран, паллӑ çынсем мӗн тӑвас тенинчен мар, вӗсен идейисенчен мар—обществӑ пурнӑçӗнчи материаллӑ условисен аталанӑвӗнчен килсе тӑнине, обществӑна пурӑнма кирлӗ материаллӑ ырлӑхсене тӑвас ӗçӗн меслечӗсем улшӑнса пынинчен, материаллӑ ырлӑхсене тӑвас çӗрте классем пӗр-пӗрипе хутшӑнса тӑни улшӑнса пынинчен, материаллӑ ырлӑхсене тӑвас тата валеçес çӗрте роль тата вырӑн йышӑнассишӗн пулса пыракан клас кӗрешӗвӗнчен килсе тӑнине кӑтартса панӑ. Çынсен обществӑлла економикӑлӑ лару-тӑруне идейӑсем мар палӑртса параççӗ, çынсен обществӑлла економикӑлӑ лару-тӑрӑвӗ вӗсен идейисене палӑртса парать. Паллӑ çынсен идейисем тата вӗсем мӗн тӑвас тенисем обществӑн економикӑлӑ аталанӑвне хирӗç, малта тӑракан клас ыйтнисене хирӗç пыраççӗ пулсан, çав паллӑ çынсем ниме те тӑмаççӗ, тата—тепӗр майлӑ—паллӑ çынсем, вӗсен идейисем тата вӗсем мӗн тӑвас тенисем обществӑн економикӑлӑ аталанӑвӗ ыйтнисене, малта тӑракан клас ыйтнисене тӗрӗс кӑтартса параççӗ пулсан, вӗсем чӑнахах та паллӑ çынсем пулса тӑма пултараççӗ.

Народниксем: массӑ вӑл—толпа, геройсем кӑна истори тӑваççӗ, толпаран халӑх тӑваççӗ, тесе каланине хирӗç марксиссем çапла ответленӗ: историне геройсем мар тӑваççӗ, истори вӑл хӑй геройсене тӑвать, çапла вара—халӑха геройсем мар, халӑх хӑй геройсене тӑвать, историйе малала илсе пырать. Геройсем, паллӑ çынсем, обществӑ аталанӑвӗн условийӗсене тӗрӗс ӑнланса илме пултараççӗ пулсан çеç—çав условисене мӗнле улӑштарса лайӑхлатмалине ӑнланса илсен çеç обществӑ пурнӑçӗнче пысӑк роль йышӑнса тӑма пултараççӗ. Геройсем, паллӑ çынсем обществӑ аталанӑвӗн условийӗсене тӗрӗс ӑнланса илме пултараймаççӗ пулсан, хӑйсене истори „тӑвакансем" вырӑнне хурса, обществӑ истори тӗлӗшпе ыйтнисене хирӗç пыма пуçлаççӗ пулсан, вӗсем ӗçсене ӑнаçлӑ тӑвайман кулӑшла тата никама кирлӗ мар етемсем вырӑнне лекме пултараççӗ.

Народниксем ӗнтӗ именнӗ çав ӗçсене ӑнаçлӑ тӑвайман геройсем йышши етемсем пулнӑ.

Плеханӑвӑн литературӑлӑ произведенийӗсем, вӑл народниксене хирӗç кӗрешни народниксен революцилӗ интеллигенци хушшинчи влийанине тӗппӗнех вӑйсӑрлатса хунӑ. Анчах народничествӑна идейӑ тӗлӗшпе пӗтӗмпех çӗмӗрсе тӑкайман-ха. Çак задачӑна—марксизм тӑшманӗ пулса тӑракан народничествӑна пӗтӗмпех çӗмӗрсе çитерессине—Ленинӑн тумала пулнӑ.

„Народная воля" йатлӑ партийе çӗмӗрсе тӑкнӑ хыççӑн, народниксен нумайтарах пайӗ патша правительствине хирӗç революцилӗ кӗрешӳ тума часах пӑрахнӑ, патша правительствипе килӗшесси, соглашени тӑвасси çинчен вӗрентме тытӑннӑ. 80-мӗш тата 90-мӗш çулсенче народниксем кулаксен интересӗсене палӑртса тӑракансем пулса тӑнӑ.

„Освобождение труда" группӑ вырӑс социал-демократсен программи валли икӗ пройект (пӗрне—1884 ç., теприне—1887 ç.) çырса хатӗрленӗ. Çакӑ вӑл Российӑра марксисла социал-демократла парти тӑвассине хатӗрлес ӗçре питех те кирлӗ утӑм пулнӑ.

Анчах „Освобождение труда" группӑн пысӑк йӑнӑшсем те пулнӑ. Вӑл хатӗрленӗ программӑн пӗрремӗш пройекчӗнче народникла шухӑшсен йулашкисем те пулнӑ, ун тӑрӑх индивидуаллӑ террор тума та йуранӑ. Плеханӑв, малала тата, революци пулса пынӑ май пролетариат хӑй хыççӑн хресченсене илсе кайма пултарнине, унӑн вӗсене илсе каймала пулнине, пролетариат хресченсемпе союз тытса пырсан кӑна патша йӗркине çӗнтерме пултарнине шута илмен. Плеханӑв, малала тата, либераллӑ буржуази вӑл—революцине çирӗппех пулӑшаймасть пулин те, революцине пулӑшмала вӑй, тесе шутланӑ, хресченсене вара хӑйӗн хӑшпӗр кӗнекисенче пачах шутран кӑларса пӑрахнӑ; сӑмахран, вӑл çакӑн пек каланӑ:

„Епӗр, буржуазипе пролетариатсӑр пуçне, пирӗн патра оппозицилӗ йе революцилӗ комбинацисем тайӑнса тӑма пултаракан урӑх обществӑлла вӑйсем курмастпӑр", тенӗ (Плеханӑв, т. III, 119 стр.).

Плеханӑвӑн çак йӑнӑш шухӑшӗсем унӑн пулас меншевикла шухӑшӗсен пуçламӑшӗ пулнӑ.

„Освобождение труда" группӑ та, вӑл вӑхӑтри марксисла кружоксем те практикӑ тӗлӗшӗнчен рабочисен йухӑмӗпе çыхӑнса тӑрайман-ха. Çакӑ вӑл Российӑра марксизм теорийӗ, марксизм идейисем, социал-демократи программин положенийӗсем пуçланса çирӗпленнӗ тапхӑр çеç пулнӑ. Вунӑ çул хушшинче, 1884—1894 çулсенче, социал-демократи уйрӑм пӗчӗк группӑсемпе кружоксем пулса çеç пурӑннӑ, вӑл группӑсемпе кружоксем рабочисен массӑллӑ йухӑмӗпе çыхӑнса тӑман йе питех те сахал çыхӑнса тӑнӑ. Социал-демократи çуралман, анчах амӑшӗн ӑшӗнче ӳсекен ача пек, Ленин çырнӑ сӑмахсемпе каласан, „ӑшра аталанас процеса" пурӑнса иртернӗ.

„Освобождение труда" группӑ „социал-демократине теори тӗлӗшпе çеç никӗслесе хывнӑ, рабочи йухӑм йенне пӗрремӗш утӑм тунӑ", тесе кӑтартса панӑ Ленин.

Российӑра марксизма рабочи йухӑмпа пӗрлештерес задачӑна, çавӑн пекех тата „Освобождение труда" группӑн йӑнӑшӗсене тӳрлетес задачӑна Ленинӑн татса памала пулнӑ.

*(ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсӗн малали „Чӑваш Коммунӗ" хаçатӑн çитес номӗрӗсенче пичетленет).*

## Комсомол активӗн Шупашкар хулинчи пухӑвӗ

Октябрӗн 8—9-мӗшӗсенче комсомол активӗн Шупашкар хулинчи пухӑвӗ пулса иртрӗ.

Пухура ПСÇЛКС Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Никифӑрӑв йулташ ПСÇЛКС Тӗпкомӗн VI мӗш пленумӗн тата Чӑваш обкомӗн IV-мӗш пленумӗн итогӗсем çинчен доклад туса пачӗ.

Пренире тухса каланӑ йулташсем комсомол обкомӗпе Шупашкар хула комитечӗн работникӗсем ытларах кабинетсенче ларнине, комсомолецсемпе çамрӑксем хушшинче сахал пулнине палӑртрӗç.

Комсомол хула комитечӗ хӑйӗн решенийӗсене пуçламӗш организацисене çитермен пирки вӗсем кут çинче çеç йуласçӗ. Йулашки вӑхӑтра „çӑмӑл кавалери" ӗçӗ сӳнсе ларнӑ. Хула комитетне пӗхсе тухма панӑ заявленисем 4 шар уйӑх выртнисем пулнӑ. Комсомолӑн йӗртсе пыракан оргӑнӗсен сулӑвне тата ПСÇЛКС ХХ çул тултарнӑ йубилейе хатӗрленес ӗçе тивӗçлипе организацилемен.

Комсомол ретне ӳстересси тата çамрӑк комсомолецсем хушшинче ӗçлесси йапах пырать.

Комсомол организацисенче комсомол ретне хӗсӗнсе кӗнӗ халӑх тӑшманӗсен йулашкисене пӗтерес ӗç, халӑх тӑшманӗсен сӑтарла ӗçӗн йулашкисене пӗтерессин çителӗксӗр пырать. Çапах та пухура ун çинчен докладчик те, тухса каланӑ йулташсем те нимӗнех те каламарӗç. Актив пухӑвӗнче самокритикӑ çителӗксӗр пулчӗ.

Пухура ПСÇЛКС Тӗпкомӗн инструкторӗ Апухтин йулташ тухса каларӗ.

Пуху ПСÇЛКС Тӗпкомӗн VI-мӗш пленумӗ тата Чӑваш обкомӗн IV-мӗш пленумӗ йышӑннӑ решенисене ырларӗ. Малашне комсомол организацисен ӗçне лайӑхлатма палӑртса резолюци йышӑнчӗ.

## ПСК(б)П Куйбышев обкомӗн пропагандиссен курсӗнче

ӲКЕРЧӖК ÇИНЧЕ: курсантсем Назарӑв, Дигулев тата Григорийӗв йулташсем ПСК(б)П истори тӑрӑх занятине хатӗрленеççӗ.

Бертрам фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото)

### Парти пурнӑçӗ

## Кружоксене тӗрӗс йӗркелени кирлӗ

Парти Тӗпкомӗн комиссийӗ редакциленӗ, парти Тӗпкомӗ ырланӑ „ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне малтанлӑха вуласа хатӗрленес ӗç кунран кун сарӑлсах пырать. Шупашкарти пур пуçламӗш парторганизацисенче те коммуниссем ПСК(б)П историпе хаçат-журналсем тӑрӑх вуласа паллашаççӗ. Анчах ку пахаӗç çине пур çӗрте те кирлӗ пек пӑхни çук-ха.

Сывлӑха сыхлав Халӑх Комиссариатӗнче парти историне хаçатсем тӑрӑх вуласа пама партирен кӑларнӑ çынна хушнӑ.

Шупашкарти парторганизацинче кӑçал пӗтӗмпе 63 пропагандист ӗçлемеле. Вӑл шутран 19 çынна çеç ПСК(б)П хула комитечӗн бӳровӗнче çирӗплетнӗ. Пропагандиссен семинарне иртерме тытӑнман.

Шупашкарти пур пуçламӗш парторганизацисенче те парти кружокӗсене пухса йӗркелес ӗç хӗрӳлӗн пырать. Анчах ку ӗçре йӑнӑшсем туни палӑркалать. Хӑшпӗр пуçламӗш парторганизацисенче (Милӳтинри вӑрман савӑтӗнче, хула советӗнче) кулленхи политикӑна начар пӗлекен йулташсене, хутла сахал пӗлекен йулташсене те ПСК(б)П историне вӗренмели кружоксене йӑвӑçтарма тытӑннӑ. Çыхӑну управленинче коммуниссен пӗлӗвӗсене шута илмесӗр пурне те парти истори кружокне хутшӑнтарнӑ. Ку йӑнӑша кӑтартса панӑ хыççӑн, вӗсем икӗ кружок туса хӑйсен йӑнӑшне тӳрлетем пекки тунӑ. Анчах халӗ те ку кружоксене тӗрӗс йӗркелемен.

Коммуниссен парти историне вӗренес хастарлӑх пысӑк, вӑл вӗренӗвӗ тӗппӗн йӗркелени кирлӗ. Анчах, çав вӑхӑтрах политграмӑтӑна вӗренес ӗçе хакламанни пулмала мар. Шупашкарти организацинче кӑçал парти уставӗпе программине вӗренмели кружоксем туман. Политграмӑтӑ шкулӗсем те Шупашкарта 4 çеç. Ку шутран иккӗшне халь организациленӗ. Чылай парторганизацисенче парти историне вӗренме политграмӑтӑ шкулӗсенчӗ вӗрентсе хатӗрлеме кирлине ӑнланса илмен. Ку ыйтӑва тӗрӗс ӑнланманни Шупашкар хулинче çеç мар, районсенче те пур.

Парти историне чи малтан пирӗн йӗртсе пыракан кадрсене—партипе совет работникӗсене, хулари тата йалти совет интеллигенцине, служащисене тата вӗренекен çамрӑксене вӗрентмеле. Çакна пӗр минутлӑха та манмала мар.

П. Перлов.

## Пропагандиссен канашлӑвӗ

ПСК(б)П Тутаркас райкомӗ вӑтам шкулсемпе туллимар вӑтам шкулсенчи учительсене ПСК(б)П историйӗн Кӗске курсне вӗрентме 21 кружок организациленӗ. Вӗсене валли пропагандиссем уйӑрса хунӑ. Çак кунсенче парткабинет учительсен кружокӗсенчи пропагандиссен канашлуне туса иртерчӗ.

Канашлу пропагандиссемпе учительсене парти историн кӗске курсне тарӑнӑн вӗрентме хатӗрленес ыйтӑва сӳтсе-йаврӗ. Пропагандиссем парткабинетран парти историн кӗске курсӗ тӑрӑх докладсемпе лекцисем иртерме ыйтрӗç.

И. Скворцов.

## Тӗппӗн вӗренме хатӗрленетпӗр

Тӑрмӑшри (Йелчӗк р.) туллимар вӑтам шкулти учительсем парти истории кӗске курсне вӗренмели кружок организацилерӗç. Кружокра 17 çын. Халӗ малтанлӑха ПСК(б)П историн Кӗске курсне вӗренме хатӗрленсе „Правда", „Красная Чувашия" хаçатсенчен вуласа паллашатпӑр. Кӗнекесем илсен тӗппӗн вӗренме пуçлатпӑр.

Парти историн кӗске курсне тарӑнӑн вӗренме пулатпӑр.

Ф. Беляйӗв.

## Дисциплинӑна çирӗплетмеле

КУСЛАВККА. (Телефон тӑрӑх). Пайан, октябрӗн 8-мӗшӗнче, иртнине 10 сехетре районри пӗччен коммуниссен пухӑвӗ уçӑлмалаччӗ. Анчах пуху кӑнтӑрла иртсен пӗр сехетре тин уçӑлчӗ. 7 коммунист: Йӑранцӗв, Шаготӑв, Васильӗв, Фадейӗв, Хмельникӑв тата Орлов йулташсем пухӑва килмерӗç.

Кунта дисциплинӑна йуратманнисем ытти çӗрте те палӑраççӗ. Сӑмахран, парти вӗренӳне районри коммуниссенчен 15 проценчӗ пачах çӳремен. Хӑшпӗр занятине 30 процент таран çӳремеççӗ. Пуринчен ытла Лашманӑв, Жиклайӗв, Николайӗв тата Ложков йулташсем парти вӗренӳне хисепе хывасшӑн мар.

Тӳрех калас пулать, хӑшпӗр коммуниссем хушшинче дисциплинӑ хавшани, чи малтанах райкомра хӑйӗнче дисциплинӑ çителӗксӗрринчен килет. Тепӗр чухне райком хӑй те пуху иртерме çителӗклӗ хатӗрленменни курӑнать. Акӑ, октябрӗн 5-мӗшӗнче актив пухӑвӗ пулса иртрӗ. Вӑл пухӑва 10 сехетре ирпе пуçламала пулнӑ. Райком хӑшпӗр коммуниссене 11 сехетре пухӑва чӗнме тытӑнать. Пухӑвӗ 12 сехетре тин уçӑлчӗ.

Райкомра ӗçлекен йулташсен тата ытти коммуниссен те çакна манас пулмасть: массӑна йӗртсе пырас тесен чи малтанах руководительсем хӑйсен дисциплинӑллӑ пулмала.

Мраньска

## Счотчиксемпе пулӑшу комиссисем ӗçлеççӗ

ХӖРЛӖ ЧУТАЙ. Пӗтӗм Союзри халӑх переписне хатӗрленес ӗç кашни кунах вӑйланса пырать. Испуханпа Елӗк йалсовечӗсенче йалсовет членӗсемпе комсомолецсем халӑха переписӗ мӗншӗн иртерни тата мӗнле майпа иртермели çинчен каласа ӑнлантараççӗ. Ку йалсоветсенче переписре ӗçлеме пулӑшу комиссисем организацилеӗ, счотчиксене уйӑрса хунӑ. Пулӑшу комиссипе счотчиксем ӗçлеме уйӑрнӑ çынсем халӗ ӗçе тытӑнчӗç.

Й. Самарин.


## Культурӑлӑ ӗçе хакламаççӗ

КАНАШ. Сӗтел-пуканcем тӑвакан хапрӑк руководительсем рабочисен канӑвӗ вӑхӑтне, культурӑлӑ иртерессе çине çиелтен пӑхаççӗ. Хапрӑкра хӗрлӗ кӗтес, библиотекӑ пурччӗ. Малтанхи вӑхӑтсенче ӗç аван пыратчӗ. Халь вӑхӑтра культмассӑллӑ ӗç пачах сӳнсе ларчӗ. Хӗрлӗ кӗтесӗ пуса унтан общежитти тӑвӗç, библиотекӑ та уйӑхра пӗр хутчен çеç кӗнекесем парать. Культработник Шмырӑв рабочисемпе калаçусем иртермест, кружоксем ӗçлемеççӗ.

Çаксем çинчен директӑр Майорӑв йулташ лайӑх пӗлсе тӑрать, анчах ӗçе лайӑхлатас тӗлӗшпе нимӗн те тумасть.

Мих. Майорӑв.

## Республикăлă Испанире



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Каталонири пĕр хулари Итали-Германи самолĕтĕсем бомбăсем пăрахса ишĕлтернĕ çуртсем.
Сойузфото („Пресклише").

# ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хĕвелтухăçри фронтра Ебро шывĕ районĕнче, Вента де Кампесиносран кăнтăр йеннерех, республиканĕцсем хайсен позицине лайăхлатнă. Пăлхавçăсен пысăк çухатусем пулнă. Республиканĕцсен авиацийĕ пăлхавçăсемпе интервентсен малти линийĕ çине тата тылра пухăнса тăнă çарĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Италипе Германи фашисĕсен 50 самолĕтне хирĕç пулнă сывлăшри çапăçура республиканĕцсем фашиссен 4 самолĕтне персе антарнă. Вăл çапăçура республиканĕцсен авиацийĕ пĕр самолĕт çухатнă. Лĕтчикĕ ним амаймасăр парашютпа аннă.

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, фашисла интервентсен октяберĕн 1-мĕшпе 8-мĕш хушшинче Ебро шывĕ патĕнчи фронтра 18 самолĕт пĕтнĕ. Республиканĕцсен авиацийĕн çав вăтăт хушшинче мĕн пурĕ те 3 истребител çеç пĕтнĕ.

Центрти фронтра Толедо районĕнче республика çарĕсем ăнăçлăн наступлени туса пырса пĕр километр мала кайнă, çĕнĕ позицисем йышăннă.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

* * *

Октяберĕн 8 мĕшĕнче фашиссен гидросамолĕчĕ Барçелонăна каякан пассажир поĕзĕ çине тискеррĕн тапăннă. Поĕзд çине 10 бомбă пăрахнă, вакунсене çĕмĕрсе тăкнă. Унтан фашиссен самолĕчĕ çав çĕмĕрсе тăкнă вакунсем çинче темиçе хутчен вĕçсе сывлăшран пулеметпа пере-пере çынсене вĕлернĕ. Малтанлăха шута илнĕ тăрăх, çав тискер тапăнура 60 çын вилнĕ тата 100 çын аманнă.

(ТАСС).

### *Октябĕр уйавĕ умĕнхи ăмăрту*

## Комсомолĕцсем производствăра

КУСЛАВККА. Çуртйĕр пайĕсем тăвакан комбинатри комсомолĕцсем ленинла-сталинла комсомол XX çул тултарнине производствăра çĕнĕ ӳсĕмсем тувипе кĕтсе илеççĕ. Чылай комсомолĕцсем хăйсем çине илнĕ обйазательствăна ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Акă, сăмахран, Кутузăв йулташ рамщичика вĕренсе тухма пулнăччĕ, халĕ вăл рамщикре ĕçлет. Политкружока та йĕркелĕ çӳресе лайăх паллăсемпе вĕренсе пырать. Подручăй пулса ĕçленĕ Васильйĕвă йулташ та станок çинче ĕçлеме вĕренчĕ.

Комбинатра пĕтĕмпе 120 комсомолĕц, вĕсенчен çурри ытла ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. 30 комсомолĕц бригадирта, 8 комсомолĕц çмевăсене йертсе пыраççĕ тата 2 комсомолĕц (Павлăв тата Йевсейĕв йулташсем) цех начальникĕсем пулса ĕçлеççĕ. Ответлă вырăнсене лартнă комсомолĕцсем ĕçре чăнчăнах хăйсен хастарлăхне, пултарулăхне кăтартаççĕ. Павлăв йулташ йертсе пыракан столярнăй цех çентябĕр уйăх планне 104 процент, Илйин йулташ çмени 120 процент тултарнă. Халĕ те вĕсем лайăх ĕçлесе пыраççĕ. Уйрăм комсомолĕцсем йулашки вăхăтра нормă ене 200-шер процентран кайа мар тултарса ĕçлеме пуçларĕç. Петухова, Çеменăв йулташсем кашни кунах нормăна 250 процент, Козин йулташ 225 процент тултараççĕ.

Комсомолĕцсем Октябер уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва хутшăннă. Вĕсем уйавччен тата пысăкрах çитĕнӳ тăвассишĕн ăмăртăва ерса пыраççĕ.

А. Мошков.

## Студентсен хорĕ

Патăрйеленчи педагогикă училищинче хор кружокĕ организацилевĕ. Хорта 77 студент тăрать. Студентсен хорне музыкă преподавателĕ Тайбинский йулташ йертсе пырать.

Ленинла комсомолăн 20 çулхи уйавне хатĕрленнĕ май, хор чылай йурăсем вĕренчĕ.

П. Карошин.

## Государствăна тырă тăратас ĕçе вĕçлесе çитермеле

Октяберĕн 5-мĕшне республика государствăна тырпул тăратмали обйазательствăна, пелтĕрхи недоимкăпа пĕрле, 93,4 процент тултарнă. Машинă-тракторлă станцисем колхозсене ĕçлесе панăшăн натурплатă тырри тăратасси татах та кайа йулнă, пурĕ те 67,9 процент çеç тултарнă. Октяберĕн 5-мĕш тĕлне республикăра государствăна тырпул тăратмали обйазательства на 7 район (Улатăр, Елĕк, Шупашкар, Шăмăршă, Шăхасан, Шанкăртам тата Çĕмĕрле) пурнăçа кĕртнĕ. Обйазательствăсене тултарасси патне Куславкка, Кувакинă, Йетĕрне, Ишлей районĕсем çывхарса пыраççĕ. Çав вăхăтрах йединоличниксем государствă умĕнчи обйазательствăна пурнăçа кĕртес йенĕпе питĕ кайа йулвă. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи йединоличниксем хăйсен обйазательствисене 56,5 процент, Çĕрпӳ районĕ—57,5 процент, Вăрмар районĕ—63,9 процент çеç тултарнă. Шăхасан районĕ пĕтĕмĕшпе хăйĕн обйазательствине 100,3 процент тултарнă пулсан, йединоличниксен йенĕпе халиччен 66,7 процент çинче ларать.

Çакă вăл районсенчи партипе совет тата хатĕрлев организацийĕсем партин облăçри XIX-мĕш конференцийĕ „çитес кĕске вăхăтрах районсем тата пĕтĕмĕшпе республика государствăна йалхуçалăх продуктисем тăратас ĕçре кайа йулнине пĕтерме ...государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçлас ĕçре уйрăм йединоличниксем йенчен палăракан государствăна хирĕçле туртăмсене татăклăн пĕтерсе пыма..." хушса хăварнине чăтма çук сӳрĕккĕн пурнăçа кĕртсе пыни çинчен калать. Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ те хăйĕн ĕçне облăçри парти конференцийĕ хушса хăварнă пек çĕнетеймен-ха. Иртнĕ вăхăтсенчи пекех сводкăсем тăрăх çеç йертсе пыраççĕ.

Государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçа кĕртес ĕçри сӳрĕклĕхе текех чăтма çук Ку ĕçре халех улшăну туни кирлĕ. Государствă умĕнчи обйазательствăсене тултарнă çĕрте палăракан государствăна хирĕçле туртăмсене татăклăн, пĕр хĕрхенӳсĕр пĕтерсе пымала.

Октябĕр уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, аслă уйава кашни йалăн, кашни районăн умри обйазательствăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешмеле.

## Колхозсем валли кирлĕ таранах кадр хатĕрлемеле

Пирĕн республикă иртнĕ вĕренӳ çулĕнче колхозсем валли массăлла кадрсем вĕрентсе хатĕрлессине пурнăçлаймарĕ. Чăваш республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ çирĕплетнĕ тăрăх районсенчи колхоз шкулĕсенчен 3.770 çынна вĕрентсе кăларас вырăнне, пурĕ 2.490 çын çеç вĕрентсе кăларнă. Колхозсем валли массăлă кадрсем хатĕрлес ĕç çине кăçал та çĕрĕç пайĕсен руководителĕсем тивĕçлипе çавăрăнса пăхмаççĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланни пĕр уйăх иртрĕ пулин те, районсенчи колхоз шкулĕсенче вĕренме кирлĕ таран çынсене илсе çитермен. Пайанхи куна Пăрачкав районĕнчи колхоз шкулĕн уйхир бригадирĕсен отделенийĕнче пурĕ те 1 çын, выльăх-чĕрлĕх бригадирĕсен отделенийĕнче 9 çын çеç вĕренеççĕ. Çавăн пекех, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Канаш, Улатăр, Елĕк тата ытти районсенчи колхоз шкулĕсенче те уйхирпе выльăх-чĕрлĕх бригадирĕсемпе ветсанитарсен отделенийĕсенче вĕренекенсене кирлĕ таран илсе çитереймен.

Кăçал пирĕн республикăра уйхирпе выльăх-чĕрлĕх техникĕсене вĕрентсе хатĕрлемели шкулсене Патăрйеленче, Вăрнарта, Куславккара, Сĕнтĕрвăрринче, Çĕрпӳре тата Йетĕрнере уçнă. Çав шкулсенче пурĕ 440 çын вĕрентмеле. Кадрсем хатĕрленĕ çĕрте тухакан тăкаксене Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ хăй çине илнĕ. Курсантсене стипенди тӳлеççĕ. Апла пулин те, çав кадрсене кирлĕ таранах вĕрентсе хатĕрлес ĕç халь пурнăçа кĕмесĕр йулас хăрушлăх умĕнче тăрать. Вăрнарти РКШ уй-хир техникĕсен отделенинче 19 çын, Куславккара — 10 çын, Çĕрпӳре — 21 çын, Йетĕрнере—8 çын çеç вĕренеççĕ.

Пĕр Тутаркас районĕнчи колхоз шкулĕ çеç хăй умне лартнă задачăсене тӳррĕн пурнăçласа пырать. Ку шкулăн уй-хир техникĕсен отделенийĕнче халь 26 çын, выльăх-чĕрлĕх отделенийĕнче 31 çын, счетовода—70 çын, выльăх фельдшĕрне—31 çын вĕренеççĕ. Тутаркас районĕнчи колхоз шкулех халь 60 çынна тракторис вĕрентсе кăларма обйазательства илнĕ. Çав вăхăтрах, Вăрнар районĕнчи колхоз шкулĕ, вĕренекенсене илсе çитерме условисем кирлĕ таранах пулнă пулин те, халиччен ĕçе пуçласа йараймаи. Пайана илсен, уйхир бригадирĕсен отделенийĕнче вĕренме мĕн пурĕ те 13 çын илнĕ.

Районсенчи çĕрĕç пайĕсен руководителĕсем те колхозсем валли кирлĕ таран кадрсем вĕрентсе хатĕрлессишĕн çине тăрса ĕçлемеççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ районсенчи колхоз шкулĕсем хăйсене пăхăнса тăни çинчен маннă. Нумай районсенче колхоз шкулĕсенче вĕренекен кадрсене вырса тăма та хватер тупса памаççĕ. Çакă та курсантсене йĕркелĕ вĕренме чăрмантарать. Районсенчи колхоз шкулĕсенче вĕренекен колхозниксене колхозран ĕçкунĕсем пама пăрахнă хыççăн уйрăм колхозсенче шкулта вĕренекен колхозниксене пулăшма пăчах пăрахнă. Çĕнĕ кадрсем çине апла пăхни йăнăш пулать. Йалхуçалăх ертелĕн сталинла уставĕ хушнă тăрăх, кашни колхозрах кадрсем хатĕрлемели фонд пулмала. Апла пулсан та, хăшпĕр уйрăм колхозсенче çав фонда тумаççĕ, кадрсене те хатĕрлемеççĕ.

Петрович.

### *Хĕрлĕ Çар пурнăçĕ*

## Октябĕр уйавне хатĕрленеççĕ

Пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен аслăран та аслă уйавĕ—Октябĕрти социалисăмлă Аслă революци 21 çул тултарнă уйав инçех мар. Ку куна пĕтĕм ĕççыннисемпе пĕрлех Мускав çар округĕнчи Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе красноармейĕцсем те пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Капитан Шувайĕв йулташăн подразделенинчи курсантсем çар ĕçне вĕренес тĕлĕшпе паха ĕçсем туса иртереççĕ. Физрук курсант Хохлов йулташ йертсе пыракан физкультурă кружокĕнчи курсантсем октябĕр уйавĕ тĕлне пурте ГТО значокĕсем илеççĕ. Пайан кун тĕлне пĕтĕм подразделенипе 89 процент ГТО значокĕн нормисене панă.

Кусемсĕр пуçне шкулти вĕренӳре те „отличнă" тата „хорошо" паллăсем илме пулса пĕр-пĕрипе социалисăмла ăмăртăва тухрĕç. Халĕ договăра мĕнле пурнăçа кĕртнине кулленех тĕрĕслесе пыраççĕ. Курсантсенчен Услайĕвпа Соловйов йулташсем пур предметсемпе те „хорошо" отметкăсемпе вĕренсе пыма пулнă. Иртнĕ кунсенче пулса иртнĕ инспекторла тĕрĕслӳре вĕсем иккĕшĕ те договăра пурнăçа кĕртессишĕн çине тăрсах вĕренсе пыни палăрчĕ. Услайĕв йулташ малтанхи тĕрĕслӳре политграматăпа „отличнă", Соловйов йулташ „хорошо" паллăсем илчĕç. Ку йулташсене кура подразделенинчи ытти чăваш красноармейĕцсем те пĕтĕм хастарлăхпа тăрăшса вĕренеççĕ. Красноармейĕцсенчен куллен кунах ленинла-сталинла комсомол ретне хутшăнакансен йышĕ ӳссех пырать. Вĕсем кашнийех комсомол кĕрсе партан историне хавасланса вĕренеççĕ.

Курсант Ишков йулташ—чăваш. Вăл иртнĕ кĕркунне Хĕрлĕ Çара килнĕ. Çара киличчен йалти пуçламăш шкулта кăна вĕренсе тухнă. Политикăпа тата ытти йенчен те питĕ начар пĕлнĕ. Хĕрлĕ Çара килсе вăл комсомола кĕчĕ. Вĕренӳре „отличнă", „хорошо" паллăсем илсе пырать.

Подразделенинче политикăлă-массăлă ĕçе малти вырăна лартнă. Ку тĕлĕшпе подразделенинчи çар комиссарĕ Иванов йулташ кружоксем организацилерĕ. Кружоксенче комсомолĕцсем кăна мар, партире тăман курсантсем те вĕренеççĕ. Вăл кружоксенче халь ПСК(б)П историн Кĕске курсне вĕренме тытăнчĕç.

Курсант Андрейĕв.

## Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

▪▪ „Чăваш коммунĕ" редакцине Т. И. колхозник çапла çырса пĕлтернĕччĕ: „Тăвай районĕнчи Сăкăтпуç колхозне кăçалхи çул выльăхсене искуственнăй майпа пĕтĕлентермели пункт, вите, выльăх-чĕрлĕхсем валли кирлĕ т. ыт. çуртсем тума государствăран вăрман панă. Вăрманне колхозниксем касса хатĕрленĕ. Анчах хатĕрленĕ вăрманран йалсовет председателĕ пулнă Федăр Охотникăв 60 кубла метр хăйне валли, 30 кубла метрне урăх çынна сутса колхозри строительствă ĕçне чăрмантарнă." Заметкăна районри çĕрĕç пайне вырăнта тĕрĕслеме йатамăр. Çырнисем тĕрĕс пулнă. Федăр Охотникăва ответ тыттарма уголовлă ĕç пуçарнă.

▪▪ „Йанăм йалсоветне кĕрекен (Тутаркас р.) „Быстрый" колхоз членĕ Илйа Смирнов ĕçсе ӳсĕрĕлсе йал хушшинче хулиганла ĕçсем тăвать; йалсовет канцелярине ӳсĕрпе пырса шкапра тăракан ĕçсене туртса кăларса арпаштарнă", тесе çырнăччĕ йалкор.

Çырса пĕлтернĕ фактсене районри милици тытăмĕ тĕрĕсленĕ. Заметкă тĕрĕс пулнă. Смирнова Уголовлă Кодексăн 74-мĕш статйин 2-мĕш пайĕпе тата 174-мĕш статйи тăрăх айăплаççĕ.

▪▪ Кириллав йалкор редакцине Йетĕрне районĕнчи Кумаккассинчи Вячеслав Бобровпа Владимир Захарăв час-часах хулиганла ĕçсем туса çӳрени çинчен çырса пĕлтернĕччĕ. Июнĕн 12-мĕшĕнче вĕсем Федăр Илйин йулташа хĕненĕ, тутаран çапса пĕтернĕ.

Çак ĕçе Иетĕрне районĕнчи милици тытăмĕ тĕрĕслесе пĕтернĕ. В. Бобровпа В. Захарăва УК 74 ш статйин 1-мĕш пайĕ тăрăх айăпласа ĕçе халăх судне панă.

Ответлă редактăр заместителĕ
В. ЙАКĂВЛĔВ.

## ВАЛЕРИИ УЙĂП

Чăвашсен поечĕ Уйăп Мишши йулташăн йуратнă ывăлĕ Валерий, чылай вăхăт йăвăр чирпе асапланнă хыççăн, октяберĕн 10-мĕшĕнче вилсе кайрĕ. Уйăп çемйи çине пысăк хуйăх ӳкрĕ. Епĕр, чăваш писателĕсем, Уйăп Мишши çемйине çак йăвăр хуйăха чăтăмлăн иртерсе йама сунатпăр.

Çемен Елкер, Иван Мучи, Илле Тукташ, Нестĕр Йанкас, Аркади Ĕçхĕл, Митта Петĕрĕ, Иван Ивник, Н. Т. Васанкка. Н. И. Шелепи.

## Пĕлтерӳ

Чăваш пединститут 1938 çулта илнĕ 1-мĕш курсра вĕренекен заочниксем валли 3 кунлă установкăлă сесси туса иртерет.

Сесси çак сруксенче пулать:

Октяберĕн 14-мĕшпе 16-мĕш хушшинче естествоведсем валли, 20-мĕшпе 22-мĕш хушшинче литературсем валли, 24-мĕшпе 26-мĕш хушшинче историксем валли, 27-мĕшпе 29-мĕш хушшинче математиксем валли

Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе пединститут 1-мĕш курсра вĕренекен пур заочниксене те шкул директăрĕсемпе килĕшсе пединститута кăтартнă срукра пыма хушаççĕ.

Çутĕç Халăх Комиссариачĕ,
Пединститут.

# Испани халăхĕн пĕрлĕх фрончĕ

Испани ĕççыннисен фашисла пăлхавçăсемпе Италипе Германи интервенчĕсене хирĕç паттăр кĕрешĕвне халăх фрончĕн правительстви йертсе пырать. Республикăлă Испанире халăх фрончĕ—пĕтĕм ĕçхалăхĕн паттăр пĕрлешĕвĕ, республикă оборонин тĕп вăйĕ, хăвачĕ. Испани халăхĕ ирĕке тухассишĕн пыракан кĕрешӳре фашисла интервентсене çĕнтермели тĕп услови.

Испанире халăх фронтне Испанири коммунисла парти пуçарнипе, вăл хутшăнса ĕçленипе туса хунă. Испанире халăх фрончĕ 1935 çулта, Испани ĕççыннисем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн реакцилĕ помещиксемпе капиталиссене хирĕç кĕрешнĕ вăхăтра йĕркелеме пуçланă. Рабочисен организацисем пĕрпĕрипе пĕрлешесси утăм хыççăн утăм тĕреклесе пынă, халăх хушшинче фашисăма хирĕç пĕтĕм вăй пĕрлешме пуçланă. 1935 çулăн вĕçĕнче Испанири вăтă профсойуз организаци—Пĕтĕм рабочисен сойузĕ çĕнĕ, революцилĕ профсойуз организацине—Ĕçлевĕн пĕрлешӳлĕ конфедерацине пĕрлешнĕ. Çак вăхăтрах, кортессен (парламент) суйлавне хатĕрленнĕ май, пĕтĕм Испани çĕршывĕнче коммунисла партипе социалисла партине пĕр-пĕрипе çыхăнтарса тăракан комитетсем туса хунă.

1936 çулти йанвар уйăхĕнче халăх фронтне йĕркелесе çитернĕ. Унта республикăри рабочисен политикăлă сулахай тĕп партисем: коммунисла парти, социалисла парти, республикăри сулахайрисен партийĕ, „Республикă Сойузĕ" текен парти, Каталонири сулахайрисен партийĕ, çавăн пекех тата Пĕтĕм рабочисен сойузĕ кĕнĕ. Пĕтĕм рабочисен сойузĕ вăл Испанири профсойуз организацисенчен чи пысăкки, вăл вăхăт тĕлне çак сойузра 2 мĕлйун патне член шутланнă. 1936 çулти феврал уйăхĕнче, кортессен суйлавĕнче халăх фрончĕ çĕнтерет. Испанин çĕнĕ парламентне суйланă членсенчен пысăк пайĕ—халăх фрончĕ йенче тăракансем пулнă.

Правительствă халăх фрончĕн программине пурнăçлас йенĕпе хăйуллăн ĕçлесе пырайманнипе усă курса, Испанири реакцилĕ партисем, фашиссем активлăнах пăлхава хатĕрленме пуçланă. Вĕсем йутçĕршыв фашисĕсем пулăшнипе халăх фронтне çĕмĕрсе тăкма, халăх фрончĕн руководителĕсемпе çулпуçĕсене пĕтерсе хума, Испани çĕршывĕпе унăн халăхне Италипе Германи фашисăмне тытса пама шутланă.

Çакăн пек хăрушлăха хирĕç пыракан кĕрешӳре халăх фрончĕ сарăлса, тĕреклене пынă. 1936 çулти апрел уйăхĕнче çамрăксен коммунисла сойузĕпе социалисла сойузĕ пĕр организацине пĕрлешеççĕ. Çав çулхинех, июль уйăхĕнче Каталонире (вăл промышленнăç йенĕпе Испанин чи вăйлă пайĕсенчен пĕри пулать) пĕр харăсах тăватă парти: Каталонири социалисла сойуз, Каталонири социалисла парти федерацийĕ, Каталонири пролетарилĕ парти тата Каталонири коммунисла парти пĕрлешеççĕ. Çапла майпа пуçланса кайнă Каталонире пĕрлешӳлĕ социалисла парти. Çак парти Испани халăхне фашисла пăлхавпа Испани çĕрĕ çине тапăнса пынă Италипе Германи интервенчĕсене хирĕç кĕрешме организацилес, мобилизацилес йенĕпе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ.

Икĕ çул ытла кĕрешет ĕнтĕ Испани халăхĕ Италипе Германин вăйлă хĕçпăшаллă фашисла интервенчĕсене хирĕç. Çак кĕрешӳре халăх фрончĕ тата ытларах вăйланса тĕреклене. 1937 çулта республикăлă Испанири çамрăксен пур организацийĕсем те: социалисла, анархисла, республикăла сойузĕсем пĕрлешсе пĕр организаци тăваççĕ, ăна националнăй альйанс (пĕрлешӳ) теççĕ. Хальхи вăхăтра çак сойуз çĕршыври çамрăксен пур организацисене те пĕрлештерсе тăрать. 1937 çулти август уйăхĕнче коммунисла партипе социалисла парти пĕрле ĕçлеме пĕр программă йышăнаççĕ. 1938 çулти март уйăхĕнче пĕтĕм рабочисен сойузĕпе Испанири тепĕр пысăк профсойуз организаци — Ĕçĕн анархо-синдикалисла националнăй конфедерацийĕ пĕр-пĕрипе килĕштерсе ĕçлемеле тунă. Анархо-синдикалисла конфедерацире членсем 1200 пин çын патне шутланнă. Тепĕр уйăхран Ĕçĕн националнăй конфедерацийĕ, çавăн пекех тата Иберири анархиссен пысăках мар федерацийĕ хăйсен представителĕсене халăх фрончĕн республик комитетне йанă. Испанири ĕççыннисен фашисăма хирĕçле политикăлă тата профсойузлă организацисем пурте пĕрлешсе çитеççĕ.

Испани республикĕнчи халăх фрончĕ—фронтра фашисăм наступленине хирĕç кĕрешсе, тылра—фашиссен агенчĕсене—троцкисла тата ытти йышши шпионсене, тăван çĕршыва сутакан предателсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе ӳсе тĕреклене.

Испанире халăх фронтне тĕреклетес ĕçре совет халăхĕн кĕрешӳ примерĕ пысăк вырăнта тăнă. Испани халăхĕ Совет Сойузĕ çине пăхса тăшмана хирĕç кĕрешме вĕренсе пынă.

Халăхсен пĕрлĕх фронтне пĕрлешнĕ Испани халăхĕн 300 пин çынлă паттăр компарти пур. Вăл парти йертсе пынипе тылра республикă оборонине какĕрлесе тăнă тăшмансене татăкланах пĕтерме пултарчĕ. Вăл правительствăра иккĕленсе тăракан тата йӳррех тăшмансене пулăшса тăракан етемсене тăрă шыв çине кăларса пачĕ. Испани халăхĕ панкрута тухнă Кабальеро правительстви вырăнне Хуан Негрин правительствине туса хума пултарчĕ. Хуан Негрин правительстви Испани халăхĕн чăн-чăн пĕрлĕх фронт правительстви пулса тăчĕ.

Негрин правительствине хальхи вăхăтра: 3 социалис, 1 коммунис, Каталонири пĕрлешӳлĕ социалисла партирен 1 член, республикăлă сулахай партирен—3 член, „Республикă сойузĕнчен"—1 представител, 1 баск националисĕ, Пĕтĕм рабочисен сойузĕнчен 1 представител тата Ĕçĕн националнăй конфедерацийĕнчен 1 представител кĕреççĕ.

Испанири компарти халăх фронтне пуçарса йарса организацилекенни пулнă. Вăл халăх фронтĕнче тăрса хăйĕн пĕтĕм вăйне çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн, Испани халăхĕн телейлĕ пурнăçĕшĕн кĕрешвĕ çĕре йарать. Коммунистсем халăх çарĕнче—çара пемĕет пек çирĕплетес хыгарлакан вăй пулса тăраç çĕ. Вĕсем тăшман техникă йенĕпе темĕн пек вăйлă пулин те, халăх çарне никам çĕнтерейми хăватлă çар туса пыраççĕ.

Испани халăхĕ икĕ çул хушши ытла ĕнтĕ фашисла тăшманпа кĕрешет, ăна вăл хытăн çапса аманттарать. Испани халăхĕ тăшмана çĕнтерессине шанса тăрать. Çавăн пек шанăçа ăна хăйĕн пĕрлешӳлĕ вăйĕсем ӳсси, тĕреклене пыни парать, çакăн пек шанăçа ăна пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем уи вăйлă тăни парать. „Испани халăхĕ хăйĕн кĕрешӳвĕнче пĕтĕм тĕнчери рабочи класса фашисăма хирĕç пыракан пулăшнине курчĕ. Социалисăмăн аслă çĕршывĕн—Совет Сойузĕн халăхĕсем татăклăнах Испани халăхĕ йенче тăраççĕ". (Г. Димитров).

Испани халăхĕ, „Испанине фашисла реакционерсен пусмăрĕнчен хăтарасси испанисен уйрăм ĕçĕ мар; вăл пĕтĕм малта пыракан прогрессивлă етемлĕхĕн пĕтĕмĕшлĕ ĕçĕ" (Сталин) пулнине пĕлет.

Çакă вăл Испанири фашисăма хирĕçле, никам çĕнтерейми халăх фронтне тĕреклетет", фашисăма çĕнтерессишĕн хайаррăн вырăнчен 1 кан кĕрешӳре Испани халăхне хавхалантарса тăрать.

## Чăвашсойузăн тĕп кантурне Шупашкарта ĕçлеме

**аслă бухгалтĕр, икĕ бухгалтĕр**

**тата**

**машинисткă кирлĕ**

Ĕç вăхăчĕпе çак адрĕспе ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, Театральная улица, дом № 7.

ЧĂВАШСОЙУЗ.

6—6

## Çĕмĕрлери

**екстракт тăвакан „Большевик" савăта**

**5 плотник, 3 столяр, 5 каменщик, 5 штукатур**

*кирлĕ*

Пурăнма хватер параççĕ.

## Чăваш крахмалтреста

крахмал савăтĕнче ĕçлеме

**МЕХАНИК**

тата трестра ĕçлеме

**ИНЖЕНЕР-МЕХАНИК**

**васкавлă кирлĕ**

Ĕç укçи килĕшӳ тăрăх.
Çак адрĕспе пĕлмелле: Чебоксары, Крахмалтрест.

3—1

„ЧĂВАШ КОММУНĔ" СЫРĂНСА ИЛМЕ ХАКСЕМ: ПĔР УЙĂХА 2 Т. 60 ПУС, 3 УЙĂХА 7 Т. 50 П., 6 УЙĂХА 15 Т., СУЛТАЛĂКА 30 ТЕНКĔ. ПОДПИСКĂНА СЫХАНУ УПРАМĔСЕМ, ПИСМОНОСЕЦСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 529 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 793.ф. 4. 58 × 84 п. л.